К 84
А-94
2622

АЛЕКСЕЙ АФАНАСЬЕВ



# ХУРА
# ЫЛТТĂН

Национальная библиотека ЧР
4-002622
ПРОВЕРЕНО
1959
512
6312
2622

А94

А. АФАНАСЬЕВ

# ХУРА ЫЛТТĂН

*(Сăвăсемпе поэмăсем)*

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Чăвашсен
Патшалăх Издательстви
Шупашкар — 1958

С (чув)

2622 чув.

ЧУВАШ...
РЕСПУБЛИ... КАЯ
БИБЛИ... А
им. Горьк...

ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ

Ирхине куратăп хĕрлĕ тухăça,
Кăнтăрла пăхатăп кăнтăр еннелле.
Каçпала саватăп ылттăн анăça
Çурçĕр çăлтăрне шыратăп эп çĕрле...

Савăнатăп эп кунта çуралнăран,
Çакă савăнăç — ман юрă-кĕвĕре.
Çĕр çул мар, пĕр вĕçĕмрен, пин çул таран
Йăлăхмасăр тăсăттăм эп ĕмĕре.

Ăçталла пăхсан та хĕпĕртет яш чун,
Пĕр çĕрте илтетĕп пурнăç кĕввине.
Куçăмпа ачашлăттăм эп кашни кун
Санăн илемне, тăван Çĕршыв-анне.

Капăр пĕлĕтсен кăтра куписене,
Тăрă тинĕсрен таса уй-хирсене,
Кăн-кăвак тĕтре пек йăмрасем айне
Ларса тухнă чаплă, çĕнĕ ялсене...

Курăттăм хĕвеллĕ ир çĕкленнине
Çĕр çул мар, пин-пин çул кашни ирхине.

Шăнкăр-шăнкăр шывлă ăшă çуркунне
Юрлăттăм чи тулăх пурнăç юррине.

Çĕр çул мар пурнасчĕ, пин çулсем таран!
Чи телейлĕ ĕмĕт панă кашнине.
Кашнинех сăн-пичĕ çаврăнать паян
«Тавтапуç» тесе тăван Мускав енне.

1948 ç.

---

## ХӖВЕЛЛӖ ҪИЛ-ҪУРТ

—Ҫил-ҫурту санӑн пур-и—тесе эс ыйтсан,
Эп калӑп, тӑванӑм, пур,— тейӗп,— кил-
ҫуртӑм.
Ун пек чаплӑ кил-ҫурт ӗмӗрне те пулман,
Вӑл ҫуртра ӗмӗте эпӗ ҫӑлтӑр пек ҫутрӑм...

Вӑл ҫуртра эпӗ ӳснӗ кунран-кун хитрен,
Ӗҫлеме, пурӑнма ачаран хатӗрленнӗ.
Саспалли палласа вулама вӗренсен,
Пуҫласа эп вӗреннӗ сӑмах пулнӑ—Ленин.

Паян кун та пурнать ҫав сӑмах чӗрере,
Сӑмах мар вӑл—ман ӗмӗр ӑшши, манӑн
пурнӑҫ...
Ман ҫуртра ун сӳнми ӑшшипе ӳлӗмрен
Ачасен ачисем те телей курса пурнӗҫ.

Эс куратӑн: умра ҫулҫӑ сарнӑ вӑрман,
Ҫырмасен хӗррипе сарӑлать улӑх аслӑн...
Асамат кӗперне юратса кӑмӑллан.
Эп калатӑп: ку манӑн кил-ҫурт, ман
хаваслӑх!..

Эс куратăн хĕвеллĕ илемлĕ яла,
Унта ĕмĕрлĕхех çĕнĕ пурнăç иленнĕ.
Уй хапхийĕ çинче вĕлтĕр-вĕлтĕр ялав—
Ун çинче çут хĕвелĕн сăн-пичĕ. Вăл—Ленин.

Эс куратăн: пиччеçĕм вĕçет тӳпере,
Тинĕсре харсăр шăллăм ишет ирĕн-каçăн,
Паттăр шăллăм тăрать аякри чикĕре,
Чи пуян уй-хирте ман юратнă аппаçăм.

Вăрçăра та çĕнтерчĕç, çĕнтерчĕç ĕçре,
Çук никам тĕнчере вĕсене çитекенĕ.
Халăх чапĕ пырать ĕмĕртен ĕмĕре,
Кăкăрсем çийĕнче чаплă орден. Вăл—Ленин.

Эп кĕрем-и телей хулине—Мускава,
Аула эп кĕрем-и—каçпа-и, ирех-и—
Мана йышăнĕç, тетĕп, тулли куркапа,
Ăсатас чухне калĕç: тăванăм, каллех кил.

Кил-çурту санăн пур-и, тăванăм, тесен,
Килĕм-çуртăм ман, тейĕп, пит чаплă, пит
аслă,
Ун патне тăсăлаççĕ çулсем пур енчен,
Ун умне çĕкленет шурăмпуç пек пуласлăх.

Вăл çуртра çук телейсĕр çуралнă пĕр çын,
Пĕр никам та унта килĕм-çуртăм çук темĕ.
Савнă пирĕн кил-çуртăмăр—пирĕн çĕршыв—
Халăхсен çирĕп шанчăкĕ, чапĕ, илемĕ...

1948 ç.

## УЙРĂЛНĂ ЧУХ

Тăван çĕршыври вăрман!
Мĕн ачаран сана илентĕм.
Çырла пек çамрăклăхчĕ ман,
Ăна йăлтах кунта ирттертĕм.

Кунта килеттĕмĕр выртма.
Ян-ян каятчĕ юрă-çемĕ...
Кăвайт çунатчĕ. Айлăма
Юртсах тухатчĕç учĕсем те.

Йĕвенĕн çутă тӳмисем
Утсем çинче çиçсе çунатчĕç.
Кăвак çилхе пек пĕлĕтсем
Çур уйăх айĕпе шăватчĕç.

«Çук, уйăх мар вăл — йĕс такан.
Ăçта-ши, теттĕм, урхамахĕ?..
Хура вăрманçăм, ват вăрман,
Санра — аваллăхăн юмахĕ!

Пăхаттирсен вăрçи çинчен
Санран эп илтнĕччĕ, вăрманăм.

Ӳссе, шăнăрланса çитсен,
Салтак пулас килетчĕ манăн.

Сыв пул, вăрман! Сан ывăлу
Ыран вăрçа тухса эп кайăп.
Янравлă пултăр кун-çулу,
Ирĕклĕхре юрлатăр кайăк.

Чăваш çынни — ĕçчен ăру
Кунта юрлатăр, утă çултăр...
Çĕн пурнăçри çĕн ĕмĕрӳ
Ĕмĕрлĕхех чечеклĕ пултăр!

1942 ç.

## АНĂÇА КАЯТЧĔ КАЧЧĂ...

Çил-тăманлă хĕл улатчĕ,
Çулсене шăлатчĕ кĕрт.
Уйрăлатчĕ çамрăк каччă,
Куççулне шăлатчĕ хĕр...

Вăрттăн-вăрттăн юрататчĕ
Çамрăк каччă çав хĕре.
Вăл ăна халь алă пачĕ
Чуптума пĕлмесĕрех...

Халь кăна умраччĕ парттă,
Кĕнекеччĕ алăра.
Вăл ăна хупса хăварчĕ
Вуласа тухмасăрах...

Таврара — куçпа виçми çĕр,
Шурă-шурă юр, ука...
Çил-тăман чаршавĕ витĕр
Çул-йĕр выртрĕ аякка.

Пĕкĕри шăнкрав калатчĕ
Йывăр уйрăлу çинчен.
Анăçа каятчĕ каччă
Хăйĕн савнă ялĕнчен...

## АН МАН

Аякра вăл, аякра, инçе...
Çӳл тусем çинче шап-шурă юр.
Хĕвел ӳкнĕ ту сĕвекĕнче,
Чул юпа çинче, çут çăлтăр пур.

Ыталаннă каччă сар хĕрпе,
Чĕрисем тапаççĕ-çке пĕрле,
Сăнĕсем çиçеççĕ телейпе,
Куçĕсем пăхаççĕ пĕр тĕле.

Мĕншĕнех çак сăнӳкерчĕке
Çыпăçтарнă шурă чул çине?
Вилнĕ-ши-мĕн каччăпа пике,
Илнĕ-шим хура çĕр вĕсене?..

Çӳлĕ ту çинче кашлать вăрман,
Пăрлă ту çинчен шывсем юхаç,
Ăш çилсем килеççĕ кăнтăртан—
Иртнĕ çапăçу çинчен калаç...

Пулнă вăйлă çапăçу кунта,
Тупăсем чĕтретнĕ чул-тăва,

Ĕмĕрхи пăра вата-вата
Çавăрнă шарлак юханшыва.

Вĕлкĕшет çут çăлтăрлă ялав,—
Ун çинче çурла та мăлатук.
Пирĕн Гварди, вăйлă пул ялан!
Тăшмана çĕнтер те мала тух!

Тăшмансем арканнă та чăл-пар,
Çук, юлман тармашкăн ыр сукмак.
Пур енчен те çунтарать кăвар,
Тĕксĕм вар кăна выртать умрах.

Нимĕçсен виллисене вара
Çăтнă тĕпсĕр, тарăн чул çыран.
Çĕнтерӳ çывхарнă вăхăтра
Пĕр гвардеец ӳкнĕ урараан.

Ĕмĕрлĕх куçне хупас чухне,
Пурнăçне суран сӳнтернĕ чух,
Ыталанă каччă çĕр питне—
Тăшмана нихçан та парас çук.

Савнă вăл хĕвеллĕ çĕршыва,
Ĕçлеме юратнă ачаран,
Телейне, таса юратăва
Вăл тăшманăн мăшкăлĕ туман.

Вилнĕ чух та вăл чĕри çинче
Тытнă чыслăн сăнӳкерчĕкне.
Сăнӳкерчĕкре: тăван çĕршывĕнче
Хăй юратнă кăмăллă пике.

Аякра вăл, аякра, инçе...
Çӳл тусем çинче шап-шурă юр.
Хĕвел ӳкнĕ ту сĕвекĕнче,
Чул юпа çинче, пĕр çăлтăр пур.

Эс ан ман ăна, пике, ан ман
Нихăçан сӳнми çав çăлтăра.
Вăл сана сыхланă пек тасан
Чĕрӳнте ун ыр ятне упра.

1948 ç.

## ТАВРĂНСАН

Ман халăхăн йăли çапла:
Çĕнтерӳпе киле килсессĕн,
Тăвансене йыхăрмалла—
Кĕрекене вырнаçчăр ретĕн.

Ай-хай, туссем, тăванăмсем,
Алла тулли черкке илсемĕр.
Асаттесем — ват салтаксем,
Эпир ĕçсен, эсир тиркемĕр.

Сăри — тăват çул йӳçнĕскер,
Пур пуçламан тулли пичкемĕр.
Сĕтел пуçне тăма чĕнер
Сире, тăван атте-аннемĕр.

Мухтав, мухтав тăван Çара!
Сыв пултăр пирĕн аслă халăх!
Пуянлăх ӳстĕр çĕршыври,
Ан иксĕлтĕр салтак вăй-халĕ!

1945 ç.

## ÇУЛСЕМ

Эпĕ утнă çулсем халь ытла инçетре—
Тупăсем çĕр питне чакаланă çĕртре.
Пĕлĕт пек, шухăшсем
Капланса килнĕçем
Куççуль витĕр хăш чух асăнатăп сире:

Сире, Дунай-шыв леш енчи çĕршывсем,
Çамрăклах хуйхăпа пĕркеленнĕ сăнсем...
Чуптăватчĕç пире
Тĕрмери тĕттĕмре,
Фашистсен аллинче пусмăр тӳснĕ çынсем.

Хам тăван çĕршыва аякри çĕрсенчен
Çыру хыççăн çыру эп çырма ӳркенмен.
Эп çыраттăм умра
Пĕлĕт пек хуп-хура
Тăшмансем капланса́н, тăшмансем сирĕлсен,

Куç умне эп астунă ачалăх тухсан:
Çут хĕвеллĕ çĕршывăм, янравлă вăрман...
Çурхи лĕп каçсенче
Çăл-валак умĕнче
Çĕмĕртсем çеçкере ларнине астусан.

Ăршапа вылякан анасен ăшшине,
Тăрисен юррипе акасен сассине
Тепĕр хут астусан,
Эп туяттăм ялан
Кĕрешме çĕнĕ вăй, çĕн хăват килнине.

Тăшмана вутпала ăшала-ăшала
Хытăрах чăмăртаттăм вĕри пăшала.
Сталинград патĕнчен
Берлина çитиччен
Пĕрле утрăмăр эпĕр ялан малалла!

Çав тусанлă çулсем халь ытла инçетре,
Халь каяс çул-йĕрсем тăсăлаççĕ хитре.
Иксĕлми юррăма
Уççăнрах юрлама
Вăй-хăватăм вĕрет, ялкăшать чĕремре!

1948 ç.

## УТМАÇУЛ

Шурăмпуç енчен вăш çил вĕçсе килсен,
Сывлăм шăрçисем чĕтреççĕ вут-хĕмле.
Çĕмĕрт шурă çеçкине тăкать иккен—
Çĕрĕпех кăпка юр çунă темелле.

Çăлтăрсем çутатрĕç тăрнасен çулне,
Шăпчăк çĕрĕпех юрларĕ чăтлăхра,
Ирхине вăл ĕçрĕ сывлăм шерпетне
Пыллă чечексем çинчен яра-яра.

Симĕс улăхпа илемлĕ ял хушши—
Пирĕн савнă вырăн — такăр утмаçул.
Мĕншĕнех пире вăл питĕ сывăх-ши,
Мĕншĕн ун çине пăхмасăр утма çук!?..

Ют çĕршывсенче те, астăватăн-и,
Çул-йĕрсем выртатчĕç тикĕс те яка.
Пурпĕр чун писетчĕ вĕсенчен, савни,
Шухăшсем вĕçетчĕç пурпĕр аякка.

Хамăр çулăмăр килсессĕн асăма,
Юрату паратчĕ шанчăк, вăй-хăват.

Малалла каймашкăн, çул-йĕре уçма
Кăкăрсем çинче выртатчĕ автомат...

Юрату сӳнмерĕ çамрăк чĕрере,
Çухалмарĕ пирĕн савнă утмаçул:
Вăл — чи ырă вырăн маншăн тĕнчере,
Ун пекки ниçта та, тусăм, урăх çук.

Сывлăшĕ те уçă хамăр çĕршыврах,
Чечексем те пыллă, сывлăмĕ — шерпет.
Юрату та пирĕн, тусăм, ăшăрах,
Туслăхăмăр çутă телейпе çиçет.

1948 ç.

---



ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

## ЮРАТНĂ САНСЕМ

Шурăмпуç çунатне сар хĕвел чуптусан,
Тĕнчене вăратса çĕнĕ кун çуралать.
Сывлăмпа çăвăнать капăрланнă вăрман,
Куккусен сассине итлесе хумханать.

Çӳлĕ ту хĕрринче сывăрать-ха тĕтре.
Варсенчи сулхăнран кĕмĕл сасă килет:
Кĕмĕл тенкĕллĕ хĕр утнă евĕр хитрен
Çăлкуçсем калаçса васкани илтĕнет.

Ёçчен çын валакран лашине шăварсан,
Юрласа вăранаççĕ тăван уй-хирсем.
Уйрăлассăм килмест нихăçан, нихăçан
Сирĕнтен, чуншăн çывăх юратнă сăнсем!

1948 ç.

## ÇУМĂР ХЫÇÇĂН

Ярăм-ярăм çумăр хĕлĕхне
Илеесчĕ манăн аллăма,
Асаматăн ылттăн пĕккине
Ман кĕсле тăвасчĕ выляма.

Выльăттăм та, майлă кĕвĕпе
Янраса пĕр кайĕччĕ кĕсле.
Ырлаттăмччĕ кĕмĕл-мерченпе
Асамат тĕрленĕ хĕвеле.

Пур çĕршывăм юрлĕччĕ манпа:
Сĕм вăрман та улăхсем, хирсем,
Çумăр хыççăн курăклă çулпа
Çырларан килен чипер хĕрсем...

Инçете çухалнă аслати
Кĕçенсе иртсен аяккалла,
Урхамах утланнă ĕç ачи
Килĕ юрттарса юрла-юрла.

Тусанран тасалнă хир çинче
Илтĕнсессĕн тăрисен юрри,
Хум кустарĕ вĕçĕмсĕр инçе
Тинĕс пек тăван колхоз тырри

1948 ç.

## ЮРАТУ

Эх, мĕншĕн эп сана хальччен курман,
Пĕрле пулсан асăрхаман-ши, тен...
Чĕрем ача чухне çеçке çурман,
Çеçке çумне ирхи çил сĕртĕнмен.

Ирхи çил пултăн манăн чĕрере,
Вăратрăн ырă, ăшă туйăма.
Сан аллуна тытасчĕ те пĕрре
Самантлăха хупасчĕ куçăма.

Куçа хупсан та сан сăну умра.
Тытма кăна май çук ăна — çав шел.
Сан куçусем каç пек ачаш, хура,
Сăнна пăхсан, йăл-йăл кулать хĕвел.

1955 ç.

## ЭС АЙĂПСĂР МАН ЧĔРЕРЕ

Эп вунă çул сана курман,
Хушшăмăрта—уй-хир, вăрман...
Курас килсен, кайма çул пур.
Те хам пыман, те эс чĕнмен...
Эпир санпа тĕл пуличчен
Тен, çĕр хут çăвĕ çумăр, юр...

Ик юплĕ пулчĕ пирĕн çул.
Сăмах кĕскеччĕ: Сывă пул...
Эп туйрăм, эс те ан пытар:
Иксĕмĕре те юрату
Сыхлатчĕ вăрттăн — эс асту,
Вăл çывăхраччĕ — юнашар.

Анчах темме çухалчĕ час.
Кама-ха уншăн айăплас?
Эс ман умра ялан таса.
Аса илетĕп хăш чухне
Ытарайми тутусене,
Вĕсем çаплах хитре-ши сан?..

Ăçта кайсан та пул хитре.
Эс айăпсăр ман чĕрере.
Манра çеç айăп пур пулас.
Чĕреçĕм — кайăксăр йăва
Сӳнсе çитмен юратăва
Çаплах усрать — ман мĕн тăвас?..

---

## АН КУЛЯНСАМ

Кӗрлерӗ юлашки хут аслати,
Йӑвашшӑн кӗрлесе шӑпланчӗ.
Ҫиҫсе ӳкмерӗ ҫиҫӗм туратти—
Вӑрман хӑех шӗл-кӑварланчӗ.

Эс аслӑ ҫул ҫине чупса тухса
Тулли кӑкӑрпала сывларӑн.
Ӗмӗтӳсем сан хӑв пекех таса,
Сан куҫусем те, ӗмӗт евӗр, тарӑн.

Ан кулянсам, час килӗ ҫуркунне.
Сар кайӑксем вӗҫсе ларсан икшерӗн,
Манпа пӗрле эс ывӑл сӑпкине
Йӑмра айне ларса сиктерӗн.

1954 ҫ.

## ИРХИНЕ

Кантăкна уçсассăн, ыйхуна сирсен,
Мĕн çинчен шутлатăн, çивĕт çивĕтлен?
Çĕнĕ кун çуралнă, çамрăк сан пекех,
Сар хĕвел çунмашкăн тухнă ир-ирех.
Йăрăс хĕр пĕвне вăл ачашлать иккен,
Тĕлĕкре сана эп ыталанă пек.

Ирхи çил вĕрет те, вăранать чечек,
Хумханать мăнаçлăн урамри тирек.
Тумланса тухатăн аслă уй-хире,
Ылттăн тинĕс хумĕ сарăлнă çĕре,
Манăн хурçă трактор кĕрлекен çĕрех.
Вăтанмастăн эсĕ. Мĕншĕн вăтанас?..

Палламан пĕр çын çук, тусăмçăм, сана.
Çăлтăрсем çутатнă санăн кăкруна.
Камăн сăнарне, çут çăлтăр пек курса,
Чĕрӳнте упратăн, тусăм, пытарса?
Кам пăхса хĕретнĕ сан çырла-сăнна?..
Ах, пĕлесчĕ манăн, каласамччĕ эс:

Кĕтмелле пулсассăн, хăçанччен кĕтес?
Шанчăк пулмасассăн, мĕншĕн кĕттерес?
Эп сана шыратăп уйăх çутипе,
Ахальтен кĕтместĕп яланах ирпе.
Уйăхпа хĕвел пек, пĕр-пĕрне курма
Юрамасть-шим пирĕн — йывăр ăнланма...

1947 ç.

## САВНИПЕ САМАХ ПЕТМЕРЕ...

Савние ман ыталасчĕ
Çутă шуçăм куриччен.
Пуласси çинчен каласчĕ,
Ыранхи телей çинчен...

Пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр
Юратса пурнас пулсан,
Ватăлмашкăн, шуçăм евĕр,
Пĕлмĕттĕмĕр нихăçан.

Чĕререн сана саватăп,
Эс мана ялан юрат—
Чун-савнисене, тăванăм,
Кам хăйса уйăраять?

Савнипе сăмах пĕтмерĕ,
Юлмĕ, теттĕм, пĕр сăмах.
Çутă шуçăм, ма кĕтмерĕн,
Ма хĕрелтĕн-ши часах?

1954 ç.

## ЮРАТАСЧĔ ТЕТĔП ТЕ...

Çулçине çупать шур хурăн
Тăрă кӳлĕ патĕнче.
Савнисем юратнă вырăн
Çавă мар-ши, тетĕп те...
Пуç тайса илет шур хурăн.

Кашласа юхать-çке тырă
Савнă ял уй-хирĕнче.
Савнисем ĕçленĕ вырăн
Çавă мар-ши, тетĕп те...
Хум çапсах юхать уй-хирĕ.

Лĕп çилсем иртеç хир урлă.
Юрă, юрă пур çĕрте.
Юратсан юрланă юрă
Çавă мар-ши, тетĕп те...
Çавра çил иртет хир урлă.

Вĕлкĕшет шап-шурă тутăр
Ылттăн хум ытамĕнче.
Чун савниçĕм çавă пултăр,
Юратасчĕ, тетĕп те...
Хум айне пулать шур тутăр...

1954 ç.

## ЫВĂЛĂМА

Савăнать ман ывăл, сиккелет шевле пек,
Хĕвеле курать вăл малтанхи хутчен,
Илтĕнет ăна çĕршыв юрри, кĕрлевĕ,
Пуçласа лăпкать ăна тӳпе илемĕ—
Вăл тин çеç-ха аннă амăш чĕрçинчен.

Амăшĕ ăна телей курма ӳстернĕ,
Сĕтпеле юн тĕсĕ унăн сăнĕнче.
Ун сăнне нимле асаплăх кивелтермĕ,
Ĕмĕчĕ ун çутă — асамат кĕперĕ,
Ун шăпи — хĕвеллĕ ĕмĕр аллинче.

Тăвалла çулпа вăл ывăнмасăр утĕ,
Ашшĕ курманне курайĕ ту çинчен.
Ашшĕ çутайман çăлтăрсене вăл çутĕ,
Ашшĕ тупайман вут чулсене вăл тупĕ,
Аслă пурнăç тăвĕ аслă ĕмĕтрен.

Унăн ĕмĕрне эп ĕмĕтпе кĕретĕп,
Çавăнпа телейлĕ, тетĕп, эп хама.
Хамăн пуç тăрне эп ывăла çĕклетĕп,
Унăн телейне чунран эп ĕненетĕп.
Ывăл тăсĕ ман пуçланă юррăма!

1946 ç.

## АСАТТЕ

Эс ҫӳретӗн кукӑр туяпа,
Пит инҫе ҫулра ӗшеннӗ пек.
Ҫуҫунтанах паллӑ: пысӑк хуйхӑпа
Утнӑ эсӗ ӗмӗр тӑршшипех.

Пӗркеленнӗ ӗнтӗ сӑн-питӳ,
Кӗмӗл тӗслӗ пулнӑ ҫӳҫӳсем.
Ачусем те санӑн пӗр кӗтӳ—
Кил-ҫурта кӳретӗн эс илем.

Сан арку тулли ача-пӑча
Сухалу айне кӗрсе ларсан,
Ватлӑх ҫитнине самант манса,
Ху та тин ҫуралнӑ пек пулан.

Эс, юмах каланӑ пек, вара
Каласа паратӑн ҫӗнӗрен
Шӑтӑк-шатӑк, чухӑн кил-ҫуртра
Ху епле имшер ӳсни ҫинчен.

Эс куратӑн, куҫҫульне шӑлса,
Ҫамрӑк мӑнуксем вылянине.
«Ҫитӗнсе ҫитсе, ҫунат хушса
Вӗҫӗр,— тетӗн,— вӗҫӗр инҫене!»

1946 ҫ.

## ПЁЛЁТСЕМ

Ç̆ӳл ту çине эп улăхмассерен
Инçетелле пăхмашкăн юрататăп.
Йĕри-тавра тӳпе. Пит инçетрен
Шур пĕлĕтсем иртеççĕ татăк-татăк.

Салам сире, ĕшеннĕ пĕлĕтсем!
Ту хӳттине çитсе пăртакçă канăр.
Куçăмăрсем тулли-çке ытарми илем,
Тăван çĕршыв тумланнă капăр.

Тӳпенелле кармашнă вышкăсем
Мăнаçланса кунта лараççĕ ретĕн.
Пĕрремĕш хут çак çĕршыва килсен,
Пуян çĕршыв — Баку çĕршывĕ, тетĕн.

Çук, Баку мар. Вăл унăн шăллĕ çех
Ун умĕнче тулли телей, пуласлăх.
Хастарлăскер, кĕске вăхăтсенчех
Вăл Бакуран мала иртсе утасчĕ.

Васкавлă пĕлĕтсем! Кавказ тĕлне çитсен,
Баку патне пырса, тен, курăр.
Урал тăвĕсенчен, ун шăллĕнчен
Вара ăна саламлăр, ырлăх сунăр!

1948 ç.

---

## НЕФТЬ

Макар мучи ĕçленине
Паянхи пек эп астăватăп.
Нумай вăл авнă пилĕкне
Кĕреш-юман пек çирĕп ватă.

Сухалĕ унăн тĕтĕм пек
Кăтраччĕ, вăрăмччĕ, кăвакчĕ.
Уçланкăра каçпа-ирпе
Вăраххăн тĕтĕм явăнатчĕ.

Чечеклĕ симĕс çереме
Сăнсăрласа çунатчĕ хурăн,
Урапасем сĕркелеме
Кăшт тикĕчĕ тумлатчĕ унăн.

Çав тикĕтпе мĕн-мĕн туман?
Уяв çитсен, пушмак сăрлатчĕç,
Ӳте çăпан-суран тухсан,
Тĕшмĕшлесе сĕрсе яратчĕç.

Масар çинчен Макар мучи
Тăрса пăхас пулсассăн халĕ,

Вӑл курӗччӗ: вӑрман ҫинчи
Вут ҫутипе ҫиҫет ун ялӗ.

Ҫынсем халь ҫӗр кӑвапине
Шӑтарнине ун пӗлеесчӗ...
Хӑй шанмӗччӗ хӑй курнине:
Епле ҫӳле тапать-ҫке нефчӗ.

Ку — иккӗмӗш Баку. Кур эс.
Ӑна ҫӗн пилӗкҫуллӑх тунӑ.
Пӗр талӑкра пӗр вышка ҫеҫ
Парать халь нефть ҫичшер ҫӗр тонна.

Куллен ӳсет ҫак нефтьпалан
Машинӑсен хӑватлӑ шавӗ.
Ку пилӗкҫуллӑх — аслӑ план—
Хастарлӑ халӑхӑн мухтавӗ!

1947 ҫ.

---

## ОКТЯБРЬСК

Илемсĕр ял ларатчĕ çакăнта,
Авалтанпах вăл пĕчĕкчĕ, кичем.
Пăхатчĕ уйăх сиввĕн чалăшса,
Çиçетчĕç çӳлĕ мичет çурлисем.

Кĕççе çине ура хуçса ларса,
Мăкăртататчĕ кĕлтуса абзи.
Чул мичет тăрринчен янăраса
Каятчĕ ял çине мулла сасси.

Нумай юр-çумăрсем тăка-тăка
Иртейрĕ унтанпа пайтах кун, çул.
Аваллăх куçрĕ вăрăм юмаха,
Хула пулса çĕкленчĕ çав аул.

Октябрьск теççĕ çĕнĕ хулана,
Шап-шур хула вăл, тулăх нефть хули.
Минутсерен-çке ӳстерет ăна
Çĕн пилĕкçуллăхăн патвар алли.

Хитреленет хула ту айӗнче,
Ун çуттисем, шăрçа пек, аякран.
Девон урамӗ тăрăх иртӗп те
Ăна паллаймăп эп пӗр-ик çултан.

1947 ç.

## АСА КИЛЕТ АЗЕРБАЙДЖАН

Тусем хыçне хĕвел ансан,
Мерченлĕ шыв ылтăнланать.
Ман умăмрах пек туйăнать
Азербайджан, Азербайджан.

Куратăп эп, Азербайджан,
Татах та пур сан пек çĕршыв.
Ăх шывĕ тухнă çыранран—
Ăна çыранĕ тăвăр-шим?..

Вăл тинĕс евĕр сарлакан
Тӳпе сăнне илсе вылять,
Сан илемӳ, Азербайджан,
Кунта килни çинчен калать.

Сенкер тӳпе инçетĕнче
Антив, шап-шур пăр ту пулмин,
Ту хӳттинче, сад пахчинче,
Антив, ан ӳстĕр мандарин—

Нефть вышкисем те факелсем
Шывсем çинче çиçсе ларсан,

Çулпа утса васканăçем
Умма тухать Азербайджан.

Шăрçаласа çĕр кăкрине,
Ӳсет хула, ванать чул ту.
Çутатрĕ Пушкăрт çĕршывне
Мухтавлă Иккĕмĕш Баку.

---

## МАЛТАН-МАЛА!

Пахчаçă юрататъ хăй пахчине.
Юрла-юрла ĕçлет хастар ĕçчен.
Çеçкеллĕ пултăр сачĕ çуркунне,
Çимĕçĕсем те ăнччăр çулсерен.

Хĕвел ӳстернĕ çимĕçе çисе
Хĕрелччĕр пичĕсем маттур çынсен.
Кашнин телейĕ пултăр темиçе,
Пулайччăр вăрăм ырă кун-çулсем.

Çак шухăшпа ырми-канми ĕçлет
Ăста пахчаçă — ĕçĕ ырă çав.
Тип туратсене каса-каса иртет—
Ӳсмешкĕн ирĕк пултăр йывăçа.

Турат çумне пытаннă çăмлă хурт,
Эхер, çулçăсене çиме тăрсан,
Тăшман валли ун наркăмăшĕ пур,—
Вилсе хутланĕ, пулĕ тип тусан.

Тăван çĕршывăмăр — хĕвеллĕ сад.
Ун ырлăхне курман пĕр çын та çук.

Анне арки ҫинчен сиксе анса
Эпир кунта вылянӑ пӗчӗк чух...

Эпир кунта вӗреннӗ юратма
Ирӗклӗхе, тӑванлӑх-туслӑха.
Кӗрекере ларма кирек кама
Саккӑмӑрсем ҫитмелӗх сарлака.

Анчах та ҫепӗҫ юрӑ ҫаврӑмне
Пӑсма шутлать пулсан кам та пулин,
Ӑна тыттармӗҫ пурнӑҫ куркине.
Вӑл—пирӗн мар, усал тӑшман вӑл ҫын.

Эпир пӗр харӑс утнӑ чух ҫулпа
Ура айне патак чиксен пӗри,
Илсе пӑрахӑпӑр вӑл ҫӳп-ҫапа—
Ҫитес ҫӗре ҫитме ан чартӑр-и!

Эпир татас ҫимӗҫсене, эхер,
Ҫӗртме тӑрсассӑн ик уралла хурт,
Шӑлса тасатӑпӑр ӗмӗрлӗхе.
Ӑна каҫармӗ пирӗн Аслӑ Суд!

Ҫӗршывӑмӑр — хӗвеллӗ сад пахчи
Ешерӗ, хунӗ ӗмӗр-ӗмӗре.
Юратнӑ парти — аслӑ сад ӑсти
Малтан-мала ертсе пырать пире!

1954 ҫ.

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Кĕрекере эпир пĕччен çĕ мар.
Тăванлăх — пирĕншĕн чи пысăк мул.
Юлташсемпе тăрар та юнашар
Тулли куркасене çӳле йăтар.
Телейлĕ пултăр кĕтнĕ çĕнĕ çул!

Пире сиктернĕ уйрăм сăпкара,
Анчах пĕрле сикеççĕ чĕресем—
Çав вăй парать, туссемĕр, хамăра,
Çăмăллатать утас çулăмăра.
Малашлăхшăн ĕçер, тус-тантăшсем!

Шикленмĕпĕр килес куна кĕтме,
Хуплас çук пĕлĕт пирĕн хĕвеле.
Телей сунар хавас яш-кĕрĕме,
Ваттисене — яш çын пек çӳреме...
Тăван çĕршывшăн пирĕн ĕçмелле!

Кĕрекере эпир ялан пĕр тан,
Пĕри те катăк мар мăн çемьере.
Çĕршыв-анне — пире çуратакан,
Аттемĕр-парти — çул кăтартакан.
Сыв пултăр парти ĕмĕр-ĕмĕре!

Телей илме каймастпăр кивçене,
Юррăмăрсем те хамăрăн—юрлар,
Аллăмăрсем те пирĕн пушă мар.
Çут çăлтăр пек çиçен черккесене
Хĕвел чечекĕн сĕткенне ярар!

Кĕрекере эпир пĕччен çĕ мар.
Тăванлăх—пирĕншĕн чи хаклă мул.
Пĕр харăссăн тăрар та юнашар
Телейшĕн, миршĕн куркасем йăтар.
Телейлĕ, мирлĕ пултăр çĕнĕ çул!

1954 ç.

# МĔТРИ

Шыв пек юхрĕ, тăкăнчĕ,
Шыв пек юхрĕ, сăрхăнчĕ
Çак çĕре хĕп-хĕрлĕ юн.
Кашни утăмшăн эпир
Çапăçрăмăр каç та ир,
Çапăçрăмăр кашни кун.

Вăрçă тусрĕ таврана.
Тĕрĕс юлнă ял сайра.
Уй-хирсем те хуп-хура,
Ишлĕк, кăмрăк, кĕл кăна...

Пĕр-пĕчченçĕ ларакан
Сăрт çинчи катмар юман
Çук, тӳсеймĕ пирĕн пек.
Тӳсрĕмĕр юра, çиле,
Шартлама хаяр хĕле
Ирттерсе уйра-хиртех.

Хуйхине те суйхине,
Шăрăхне те сиввине
Тӳсрĕмĕр те куртăмăр.

Ăшшине пайлаттăмăр,
Сиввине пайлаттăмăр,
Пĕр тăван пек, пурсăмăр.

Çакăн пек юратупа,
Тĕрĕс, тӳрĕ кăмăлпа
Килĕшӳллĕ пурăнсан,
Хăруш мар-мĕн çил-тăман,
Йывăр мар иккен суран,
Хăруш мар тискер тăшман!

Çапăçса çĕне-çĕне
Çакăн пек пĕр ирхине
Илтĕмĕр умри яла.
Пур çĕрте выртать тăшман—
Çулнă, тейĕн, урараан
Çавапа сула-сула.

Халь те куçăм умĕнче
Çунакан çурт патĕнче
Хурлăхлă ача тăни.
Ыйтрăмăр, тĕпчерĕмĕр:
— Ма йĕретĕн?— терĕмĕр,—
Аçуна çухатрăн-и?

Е аннӳ те çук-и сан?
Е сана усал тăшман
Тиврĕ-и, тăлăхскере?
Кăшт пуçне çĕклерĕ те
Пăхрĕ вăл пит инçете—
Хăй кайса курман çĕре.

«Манăн хуйхăм пысăк çав
Аннене вĕлерчĕç, ав,
Ман юратнă аннене...
Партизанччĕ ман атте.
Нимĕçсем-çке тытрĕç те
Çакрĕç манăн аттене.

Юмахри пек, пĕр сулсан
Çичĕ çухрăм çулакан
Çивĕч хĕçĕм пултăрччĕ.
Пĕтĕм ĕмĕт çакă ман.
Çавнашкал хĕç пулмасан,
Автомат та юрĕччĕ»...

— Эс мĕн ятлă, кам пулан?—
Ыйтрăмăр эпир унран.
«Манăн ятăм, — тет Мĕтри,—
Калаçмашкăн хĕрнĕскер.—
Эпĕ,— тет вăл,— пионер!»—
Галстукне çыхать хайхи.

— Тăшмана çапса çĕнсен,
Сирĕн пек ӳссе çитсен,
Комсомолец пулăп!— тет.
Асăрхать хăй: салтаксен
Кăкрисем çинче хитрен
Комсомол палли çиçет.

Астăватăп, ун чухне
Итлекен салтаксене
Питĕ килĕшрĕ Мĕтри.
Çăлтăрлă пилоткине

Тăхăнтартрĕ ун пуçне
Çавăнтах пиртен пĕри.

Тумлантартăмăр вара
Вăрçăри пионера,—
Пулчĕ пĕчĕкçĕ салтак.
Уринчи атти кăна
Килĕшмерĕ кăшт ăна:
Кунчисем шалпартарах.

Виçĕ уйăх пирĕнпе
Аслă вăрçă хирĕпе
Ывăнмасăр утрĕ вăл.
Виçĕ талăк хăш чухне
Вăл хупман куçĕсене—
Пурпĕрех тўсетчĕ вăл.

Е аманнă юлташа
Вăл тупать те шыраса,
Ун юнне юхма чарать.
Е пĕрер тĕме хыçне
Тăшмансем пытаннине
Пуринчен малтан курать.

Çĕр çинче шума тата
Калтаран та вăл ăста—
Çавнашкал вăл харсăрччĕ!
Астăвап, пĕрре умра
Курăнайрĕ хуп-хуран
Тăшмансенĕн ту-сăрчĕ.

Каркаланă ун тавра
Урлă-пирлĕ, çăп-çăра

Йěплě-юплě пăралук.
Эрешмен карти пекех
Каркаланă талккишпех,—
Пуç чикме те хушăк çук.

Çакăнта çитсе тăрсан,
Çěтрě-кайрě ăнсăртран
Пирěн шăллăмăр Мěтри.
Вилчě-ши́м, хастарлăскер,
Пирěн çамрăк пионер?
Лекрě-шим тăшман пули?

Акă кěтнě ир çитсен,
Куртăмăр: тăшман енчен
Талпăçать ак пěр-пěччен
Пирěн тус Мěтри — сывах!
Калаçать хăй кăшкăрсах.
Хěм çиçет ик куçěнче.

Хыçěнче хăй темскере,
Пулемет евěрскере,
Сěтěрсе килет иккен.
Калаçать хăй, ав, лере
Нимěçе пере-пере
Патронсем пěтни çинчен.

Вăл калать — тăшмансенчен
Хăрамасăр, пěр-пěччен
Пулемет илни çинчен...
Пытарать хăй суранне,
Палăртмасть ыратнине—
Юн тумлать пěр аллинчен...

* * *

...Çухалас кун вăл темме
Қалаçмарĕ пирĕнпе,
Темĕн пулчĕ Мĕтрие.
Амăшшĕн те ашшĕшĕн
Таварма шутланă-мĕн
Вăл çав каç тăшмансене.

Аякри сĕвек сăрта
Қаç мĕлки хуратнă та,
Хырăмпа шăва-шăва
Қайнă çав Мĕтри пиртен—
Шунă-шунă ерипен
Тăнласа кашни шава.

Хĕвелтухăçĕ кĕрен
Тĕспеле сăрланиччен
Сикнĕ-тăнă та Мĕтри
Çывракан фрицсем çине
Тĕллесе автоматне—
«Акă—тенĕ,— лекрĕр-и!»

Ывăтнă гранатине
Тĕлĕрнĕ окоп ăшне,
Ывăтнă тата тепре.
Қĕмсĕр-кĕмсĕр аслати
Қĕрлесе, таçта çити
Чĕтрентернĕ пур çĕре.

Пĕр кĕтмен-туман çĕртен
Вилĕм куç умне çитсен,

Сехри хăпнă нимĕçсен.
Вилнисем сас кăларман,
Чĕррисем тек чăтайман—
Чакнă каялла вĕсем.

Хай Мĕтри трофейпеле
Чупнă хамăр еннелле.
Илтнĕ вăл: кĕрлет «Ура!»
Сып-сывах вăл, çук, вилмен.
Вилĕм илеймест иккен
Пирĕн çамрăк паттăра.

1947 ç.

## ТĂВАН ТАВРАЛĂХРА

Çулталăкне пĕрре
Пĕкĕлмене çула тухас пулсан,
Пĕр хывăнмасăрах выртаттăмăр
каçран.
Аннеçĕм ир-ирех
Вăратмалла пире,
Ял варрипе кĕтӳ иртсе кайсан.
Эпир ачаччĕ-ха,
Çула тухни танлашнă уявпа.
Шуçчуман мар — хуп сарнă урапа,
Пире лăска-лăска,
Чупатчĕ аякка
Юмах пек вăрăм çĕр çулхи çулпа...
Палланă вырăнсем!
Мăн çын пулса килетĕп çавăнта:
Асамлă улăп çутнă пек çурта—
Çунаççĕ факелсем...
Нефть вышкисем
Сăрт хĕрринче лараççĕ хуралта.
Шыра, хăть ан шыра—
Çулкурăкĕ хуплануă кив çула.
Çын çӳремен кĕпер çинче хăмла

Ӳсет хӑвалӑхра.
Йӑлтӑрать умра
Асфальт-шоссе ялтан хуланалла.
Пӗр-пӗринчен иртсе,
Машинӑсем чупаççӗ вӗçӗмрен:
Пӗкӗлмене кай, ирт Пӗкӗлмерен,
Кучченеçсем илсе
Яла вӗçсе çитсен,
Çумкка мучи ура пӗр сыриччен.
Тӑван çӗршывӑма
Паллас çӗртен паллаймӑн ку чухне
Ыталӑттӑм тӑван çӗр-аннене—
Май çук ыталама.
Шалти ыр туйӑма
Шӑрçа туса тирем-шим хут çине?

* *
*

Хӗр анса юлать автобусран.
Тӗлӗрет шӑп Çӗрлехи вӑрман.
Буровой сасси кӑна
Вӑхӑт-вӑхӑт таврана
Янраса каять таçти вартан.
Çул хӗрнех пытаннӑ пултӑран.
Ешӗл курӑк — хӗр кӑкри таран.
Йӑлтӑр-йӑлтӑр çутӑ хурт—
Аллунта пулсан шур хут
Вӑрттӑн вуламашкӑн пултаран.
Курӑка сирсе хӗр утнӑçем
Сапаланчӗç, сӳнчӗç çутӑ пӑнчӑсем.
Пысӑк факел çутипе
Вӑркӑшса илет тӳпе.

Факел айӗнче—йӗвенлӗ ачасем.
Шурӑ хӳшӗ пур уçланкӑра,
Сӗм çӗрле те çутӑ ун тавра.
Хӗр пӑхать те сехетне,
Шурӑ пусмасем çине
Хӑвӑрт хӑпарса тӑрать вара.
Пӑрӑх тӑрӑх çухрӑм аяла
Çӗр ӑшне ун хырчӑк ямалла—
Тасатать вӑл пӑрӑха—
Тӑтӑр нефть юха-юха,
Чарӑнмасӑр таптӑр тулалла.

Опператор теççӗ çак хӗре.
Хӳшӗрен хӳшше çӳре-çӳре
Ывӑнма пӗлмест ӗçчен.
Тепӗр вахтӑ киличчен
Юрӑпа кӗтсе илет ире.

* *
*

Çӳлӗ Бавлӑ тӑвӗсем, пуклак—
Кивӗ тӳпетей пек аякран.
Инçетре, тӗтре пек, кӑн-кӑвак
Тӑсӑлать ту тӑрӑх ват вӑрман.

Куçӗсем пулсассӑн ту-сӑртсен,
Вӑрмансем илтме пултарайсан,
Ыр хӑна пек, кӑмӑл туличчен
Вӗсемпе калаçӑттӑм паян.

Вӗсене епле юратнине
Хам кӑна пӗлетӗп, хам кӑна—

Ют çĕрте пĕр çул пурнассине
Çакăнта ылмашăп пĕр куна.

Пĕрмĕш вышкăпа пĕрле кунта
Сăввăма шăратрăм эпĕ те.
Эп нефтяник мар та, тупата,
Нефть шăрши манран та çапатех!

1956 ç.

---

## ÇУЛ ХЫÇÇĂН ÇУЛ ИРТСЕН...

Мана эс ăшшăн йышăнтăн, тăван,
Çав тĕлпулу паян та асăмра.
Сан чĕрӳнте, эп сисрĕм, пур суран.
Вăлтса ыйтсан, сурах мана куçран:
Сан çамрăк арăму ăçта вара?

Хĕрарăм çуккине сисме ансат:
Тăм чӳлмекри сад виç кун шыв курман.
Сантал чечек... унтах, ав, тип турат...
Турат хăрсан, хăçан çеçке çуратĕ?
Чуну çаплах хăрамасть-ши йăнăшран?

Начар каларăм та — ан ӳпкеле.
Кулас килмесĕр култăн — кулăшла.
Ĕçес килмесĕр ĕçрĕмĕр пĕрле,
Мĕн юлнине пуçтартăн тĕпеле.
Ма кичемлентĕн, тусăмçăм, кала?

Вăрах чĕнмерĕн — йывăр-им чĕнме?
Куçна эс шăлтăн шурă тутăрпа.
Юри килсеттĕм сăвă итлеме.

Сан чӗрӳне, тăванăм, имлеме
Сăмах тупаймăп сăвăç мар пуçпа.

Эс йăлăнтăн мана пӗрле ларма.
Ыран каятпăр, терӗн, пӗр яла,
Куратпăр, терӗн, савнă арăма.
Шухăшламанччӗ уйрăм пурăнма,
Уйрăласси — пиртен тухман йăла.

Юнашарах çуралнă-ши мӗн-ма
Юратупа çав уйрăлу тени?
Вӗсен хушши — пӗр утăм, иккӗ мар.
Уйрăличчен пӗлместпӗр юратма,
Уйрăлсанах аса килет иртни.

Юратмасассăн — сивӗнни паха.
Ма уйрăлас пӗлсе юратнисен?
Ыр хуньăмăн хапхи — хăма хапха
Хăна уçса кӗртмелӗх мар пуль-ха,
Мӗн тейӗç-ши ăна уçса кӗрсен?

«Такси» çул тытрӗ çитмӗл çухрăма,
Эпир санпа ларатпăр юнашар.
Умра выртать тип-тикӗс çул — çатма.
Мӗн калаçать-ши шăнкăрти çырма?
Мӗн каласа юлать-ши Шупашкар?

Çул ик енче вăрманӗсем чипер,
Ял варринчи йăмрийӗсем кăтра.
Хумханакан хирваррипе вӗçер,
Юри анса, тăванăм, виçӗнер—
Хир хумӗнчен эпир санпа лутра.

Çитес çĕре çитетпĕр. Кĕтнĕ пек
Уçах тăрать-мĕн укăлча хапхи.
Урам ик енĕ — шурă шĕтĕрнек,
Хĕвел хăпарнă йăмрасем тăрнех.
Паллană ял, аван-и, лайăх-и?!

Тăп чарăнатпăр çĕнĕ çурт умне.
Килнĕскерсем пӳртнех кĕретпĕр-и?
Тен, ют тесе каламĕç кĕрӳшне?
Ĕлĕкхи пек, тен, кĕреке варне
Лартса сана тыттарĕç ял сăри?

Пусма çине хуньу тухса тăрать.
Вăл куçлăх витĕр кăн пăхать сана.
Сăмах шырать хăй, аллине парать.
«Шăнăçаймарăр-мĕн пĕр йăвара,—
Тесе каласшăн куçĕпе сăнать.—

Урайĕнче сан пĕчĕкçĕ хĕрӳ
Пуканелле вылять пĕр кĕтесре.
Вăл санпала пĕр юн, пĕр чун, пĕр ӳт.
Ӳссен кама ӳпкелĕ вăл, кĕрӳ?
Вăл халĕ пĕчĕкçĕ, вăл виççĕре...»

Эс вăрттăн шăлтăн куççульне ун чух,
Ачашлама хăймарăн пепкене.
Хăлаçланса чупса вăл пырас çук
Сан çĕмĕрт куçлă виççĕри ачу,
Маннах иккен хăй ашшĕн сассине.

...Эп. астăватăп: ăшă çуркунне
Хĕвеллĕ çумăр иртрĕ ташласа,

Тӗрлерӗ асамат хула садне.
Пӗччен хусах ҫӳреттӗн ун чухне
Савни ҫинчен ҫеҫ сăвă вуласа.

Эс паллаштартăн ҫамрăк хӗрпеле.
Студенткăччӗ... экзаменччӗ вӗсен.
Қайран эсир унпа пӗрлешмелле,
Яла кайса туйне ирттермелле.
Пӗр-пӗрине саватăр чӗререн.

Ун хыҫҫăн тек курманччӗ эп ăна
Халь курнăҫма та темшӗн ырă мар.
Ватти таҫта ҫухалчӗ час кăна.
Вăл кансӗрлес темерӗ ик чуна,
Пӗр сирӗншӗн ун чӗринче — кăвар.

Пӗрлешчӗр, терӗ пуль, яланлăха
Қам йăнăшнă — ан йăнăштăр текех.
Пӗрле пулни пуриншӗн те паха.
Чим, арăму та тӳснӗ тунсăха.
Вăл алă пачӗ ним пулман пекех.

Сӗтел ҫине ҫăкăр-яшка лартса
Ҫапла каланине эп астăватăп:
«Тата пăртак пурнар-ха уйрăлса...
Сана манмарăм эпӗ манасса,
Упратăп-ха сӳнмен юратăва.

Анчах чӗре суранӗ тӳрленмен,
Ҫунтаракан суранӗсем нумай.
Ҫырлаллă ҫу иртсе кӗр ҫитиччен
Қаяс килмест аттен ыр йăвинчен,
Эп халлӗхе юлатăп, эсӗ кай...»

Ирпе ирех тухайрӑмӑр ҫула,
Ҫывӑракан хӗрне чуптурӑн эс.
Ун амӑш тутӑрне сула-сула
Тӑрса юлайрӗ — чун ыратмалла,
Ӑна мӗнпе-ха йӑпатма пӗлес?

Ҫул хыҫҫӑн ҫул халь иртрӗ васкаса.
Санран илместӗп пӗр хыпар, ҫыру.
Ларатӑп та пӗр шухӑша кайса,
Ял вӗҫӗнче шур тутӑрне сулса
Тӑрать пек халь те савнӑ мӑшӑру.

1955 ç.

## СĂНӰКЕРЧĔК

Кивелнĕ сăнӳкерчĕк. Хыçĕнче
Асăнмалăх çырнă ĕлĕкех.
Çыру çиппи шупкалнă та çинçе,
Çинçе пулсассăн та шур хут çинче
Татăлмиччĕ вăл ĕмĕрлĕхе.

Ăна тытса эп вуламассерен
Çамрăкрах пулатăп, ачашрах.
Хам юратса ачашлама пĕлмен
Хитре сăн тунсăхлă пăхать лерен.
Каçарах, тăванăм, каçарах.

Кивелнĕ сăнӳкерчĕк арчара,
Каймăн эсĕ асăмран çапах.
Çамрăклăха астунă вăхăтра
Чĕре çуннишĕн, тусăм, ан хăра.
Çулăмсăр чĕре вăл сӳннĕ тахçанах.

1956 ç.

## ИКĔ ХĔРАРĂМ

Пин-пин хĕрарăм хушшинче
Вăл уйрăм, урăхла.
Сайра тĕлпулăн ялсенче,
Ун пурнăçĕ — хула.

Ăна шăв-шавлă хулара
Пĕлмен этем сахал.
Мĕнпе чысланнă вăл ара?
Мĕнре ун ăраскал?

Ĕçре тухма пулать чапа,
Кĕрешӳре — мухтав!
Анчах эп асăннă аппа
Ĕçре услам, юлхав.

Пĕртен-пĕр ĕмĕт укçара,
Тумтир те маникюр.
Арчисене уçмасăрах
Пĕлетпĕр: мулĕ пур.

Ун упăшки ахаль çын мар,
Вăл пысăк вырăнта.

Шоферĕ хăйĕн, секретерь—
Ан перĕн яхăн та!

Пĕр ĕçсĕрех килте ларать
Хĕрарăм-пукане.
Пур тĕнчипе шырас пулать,—
Чăнах, ун йышшине.

Ирпе çут шуçăм килнине
Тахçантанпах курман.
Йăмралăхри çырма хĕрне
Ҫĕвентепе анман.

Вăл çеçпĕл пек кăвак тӳпе
Хитре чух, çуркунне,
Ҫурман сар пурçăн пек çилпе
Ăрша вылянине.

Ҫава тытса, пĕр ярăнса
Вăл утă çулнă-ши?
Ҫулман çав. Тĕкĕре пăхса
Сăрланă куçхарши.

Пĕртен-пĕр хĕрĕ пур вĕсен—
Вĕреннĕ хĕр пулать:
Института çӳрет куллен,
Ҫĕнекесем суйлать.

Пĕррехинче хыпаланса
Вăл таврăнать киле—
Ун амăшне ыталаса
Хыпар пĕлтермелле.

Пĕлтермелле ун ыр хыпар
Пӳрте кĕрсен тӳрех:
— Аннеçĕм, чунăм, ирĕк пар—
Каятпăр çĕн çĕрех.

Каятпăр, ушкăнпа, анне,
Инçе-инçе çĕре,
Тырпул пухма çамрăксене
Çĕршыв чĕнет пире.

Хăй тивĕçне пурнăçласа
Курман çын ку чухне
Тăрать, аннеçĕм, çур пуса.
Çур пус — пасар кунне!—

Каймарĕ амăш кăмăлне
Хĕр калаçни пачах:
— Мĕн шыраса çăва хĕрне
Каять ача-пăча?

Çамрăкскере эп ярăп-и
Телей çук пек çумран?
Телей кӳрен кăвакхуппи
Сасартăк пулакан.

Çак хулара та ĕç пĕтмен,
Ăçу та ятсăр мар.
Ан шухăшла Алтай çинчен,
Мана тек ан çунтар.—

Йĕрет хĕрарăм куççульпе
Сăлтавсăрах йĕрет.

Самăрлăхне тӳсменнипе
Йĕрет, теес килет.

* *
*

Çук мар çав, урăхла йышши
Хĕрарăм пирĕн пур.
Матурланмасть вăл ытлашши,
Хăех çапла матур.

Мĕн тăхăнсан та килĕшет—
Куратăн, тĕлĕнен:
Телей пахчи тума пĕлет
Вăл пĕрчĕ телейрен.

Лараймĕ ĕçсĕр çур минут
Хирте, кил хушшинче.
Арçын тытас çук харсăр ут
Ташлать ун аллинче.

Пĕрле ларса канашлама
Çук савнă упăшки.
Пĕччен масар çинче хăма—
Ун упăшкин мĕлки.

Пĕртен-пĕр хĕрĕ те килтен
Каять çĕн çĕрелле.
— Эс маншăн ан çун, ан хĕрхен,
Хăвна та ан шелле,—

Çапла каларĕ амăшĕ
Вунçиччĕри хĕре,—

Аса илсессĕн ăш пăшĕ,
Ачашлăн минтере.

Анне чĕри çав — сарă çу,
Анчах пул çирĕп эс,
Чĕкеçĕм, эсĕ шырас çук
Пĕр хăвшăн ыр кĕтес.

Çӳре эс пысăк хапхаран,
Инçе кай, вĕç çӳле,—
Хĕр амăшĕ пĕччен юлсан,
Лăш шăлчĕ куççуле.

Вăл савнăç куççулĕччĕ—
Йăлашăн макăрман.
Çак ыр хĕрарăм кулĕччĕ
Леш ют хĕрарăмран.

Çук мар çав, пирĕн çемьере
Хĕрарăм тĕрли пур:
Пĕри писев тĕспе хитре,—
Тепри хăех матур!

1956 ç.

## ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

Алла илетĕп сан кĕнекӳне
Вăл пысăк мар, анчах мĕнчул ăшши!
Ахальтен мар хĕвеллĕ Çуркунне
Сана çуратнă ир, Çеçпĕл Мишши.

Эс калани — çунтаракан сăмах,
Тулли хаваслăх, шанчăк, пуласси...
Кĕнекӳне уçса хурсассăнах
Илтетĕп эп: янрать ака́ сасси...

Чăваш чĕлхин ем-ешĕл Çеремне
Эс сухаларăн пирĕншĕн, Мишша.
Кăвар-чĕлхе нихçан сӳнмессине
Каларăн пуçласа эс, чăваша.

Эппин, поэт, чĕлхе сӳнмест пулсан,
Эс чаплă пулăн халăхра ялан.
Паянхинчен те ăшшăнрах ыран
Пулас ăру калаçĕ санпалан.

## ФУКУРЮМАРУ ЮРРИ

*„ ... 1954 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Лăпкă океанра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем пăрахнă водород бомби çурăлнипе Японири „Фукурюмару-5“ ятлă пулăçсен киммин экипажĕ радиоактивлă кĕл тăкăннă вырăна лекнĕ те сывлайми чире кайнă... “ (Хаçатсенчен).*

1

Ан тухăр, пулăçсем, пулла.
Халь Лăпкă тинĕс лăпкă мар.
Аташнă, çĕрĕшнĕ хăма
Ишсе тухасшăн каялла...
Ан кайăр, пулăçсем, пулла.

Халь Лăпкă тинĕс лăпкă мар,
Пытаннă пулă авăра,
Çук кайăк кĕтнĕ йăвара,
Хумсем сикеççĕ чăп-чăпар—
Ах, Лăпкă тинĕс лăпкă мар.

Аташнă, çĕрĕшнĕ хăма
Тупаймĕ тинĕс чиккине,
Пĕлет вăл килĕ çуккине,
Пĕлмест вăл килшĕн макăрма—
Аташнă, çĕрĕшнĕ хăма.

Çухалнă кимĕ каялла
Ишсе тухаймĕ тăвăлран.

Ун хӑмисем, сывах юлсан,
Хум çийĕн çӳрĕç ав çапла
Ишсе тухасшӑн каялла...
Ан тухӑр, пулӑçсем, пулла.

Халь Лӑпкӑ тинĕс хуп-хура.
Киммĕрсене çыхса хурса
Таврӑнмалла киле, яла.
Ан кайӑр, пулӑçсем, пулла!

2.

«Фукурюмару» итлемерĕ,
(«Фукурюмару»— кимĕ ячĕ)
Вӑл кунĕпех ишсе çӳрерĕ,
Хумсем çине йĕрсем хӑварчĕ.

Пулӑçсем ишсе ĕшенчĕç,
Тетелĕсем тухаççĕ пушӑ.
Тавралӑх сулхӑн тум пĕркенчĕ,
Çӳлте кӑна хĕвел — пĕр хушӑк.

Мĕн иртенпех-çке ырӑ мар кун.
Пĕр хӑрамасӑр çиле хирĕç
Ма тухрĕ-ши «Фукурюмару»?
Сукмаксӑр, çулсӑр-çке çак тинĕс!..

Çухалчĕ ял — тӑван Мисаки,
Путса пытанчĕ ун çыранĕ.
Çыран хĕрне лартас-мĕн шакӑ,
Халь çук пулла кунта шыра ĕнтĕ...

Хăюллă кимĕ капитанĕ
— Ан хуйхăрăр, пулать,— тет,—
пулă!
Тинĕселле хĕвел пытанĕ,
Çул тытăпăр киле хăюллăн.

Мĕн калаçса вĕçет-ши çилĕ?
Ăçталла май чупать-ши хумĕ?
«Фукурюмару»— пĕчĕк кимĕ
Тăван çыран енне çул тупĕ.

3.

Бикини утравĕ енче
Ма тинĕс пушшех тулашать?
Бикини утравĕ инçе,
Қураймăн унта пулăçа.

Бикини утравĕ енне
Вĕçет хурçă кайăк çӳлтен.
Қам пĕлтĕр вăл ма вĕçнине?
Пулăç çуначĕ — кĕсмен.

Çӳлте чухăн пулăç вĕçмен,
Хум каснă иртен çĕрлеччен,
Çынна пӳрнепе тĕкĕнмен,
Хăйне тĕкĕнсен те чĕнмен...

Сӳнет хурçă кайăк сасси
Шатра пĕлĕтрен çӳлерех.
Халех, самантрах пуласси
Ăçтан паллă пултăр тӳрех?

Ахлатрĕ хаяр вут юпи,
Çĕкленчĕ çĕртен тӳпене.
Çӳлтех хăмăр тĕтĕм кăмпи—
Ӳкет мĕлки тинĕс çине.

Çук, вилĕм ӳкет, мĕлке мар.
Çĕре кĕл пулса тăкăнать.
Кама кирлĕ вилĕм, кăвар?
Пурнасчĕ-çке мирлĕ кăна!

4.

Вилешĕн больница ма кирлĕ?
Усси пулас çук тухтăрсен.
Пĕри куçне хупнă та вилнĕ,
Кусем — черетре, халĕ чирлĕ,
Çурта пек сӳнеççĕ хуллен.

Кусем те вилеççĕ. Вилеççĕ,
Шутлаççĕ кунсем иртнине.
Ял-ял тăрăх, çăкăр валеçнĕн,
Вăрçа ылханса халь çӳреççĕ,
Манасшăн суран сурнине.

Вĕсем вилнипе пĕтмĕ халăх,
Анчах хирĕç тăрĕ вăрçа.
Чыспа вилнине асăнмалăх
Ахах чулсенчен хыврĕ палăк.
Мĕн пур-ха усси макăрса?

5.

Упăшкине çĕре пытарчĕ,
Сузо нумай куççуль тăкмарĕ.

Çыран хĕрне пырса вăл ларчĕ
Сана курма, «Фукурюмару».

Кунсеренех кунта кĕтетчĕ
Упăшкине Сузо хаваслăн.
Ĕсĕклесе хумсем йĕреççĕ—
Сузо, сана сăмах калассăн.

Мăшăру — Айкити Кубояма
Тек кимĕпе пулла çӳреймĕ,
Çĕрле шăп алăка шаккамĕ,
Тек уншăн мар тĕнче илемĕ.

Ун кун-çулне ирех ма татрĕç?
Кама Айкити чăрмантарнă?
Масар çине ăна ăсатрĕç.
Çемйи ун тăлăх-çке, мăнтарăн.

Тек водород бомби ан ӳктĕр,
Никам çунса ан вилтĕр ӳлĕм.
Уç сывлăшра ан çунтăр кӳкĕрт,
Ан юхтăр тăлăх çын куççулĕ.—

Çак шухăшпа, Сузо тăванăм,
Америках çитесшĕн эсĕ.
Вăрçа-вăрçа кăна йăпанăн.
Унта сана туссем кĕтеççĕ.

Анчах та чăркăш департамент
Çула тухма çыру памарĕ.
Антив! Антив! Вăй хамăрта-мĕн,
Вăй хамăрта, «Фукурюмару»!

Ан пултăрах тек Нагасаки,
Ан пултăр урăх Хиросима!—
Мĕнпур тĕнчен тĕллевĕ çакă,
Ăна никам та хирĕç пымĕ.

Кам хирĕç — вăл хура чĕреллĕ,
Пĕр никама та кирлĕ мар вăл!—
Çапла юрлать пин-пин чĕлхеллĕн
Яппун кимми «Фукурюмару».

## ТИНĔС

Пĕрремĕш хут сан умăнта тăратăп, тинĕс!
Пĕр тĕлĕнсе, пĕр савăнса пăхатăп сан çине.
Кăвак тӳпе патне çитсен эс лăпкă, тикĕс,
Çыран хĕрне çитсен—çĕклетĕн çиллĕ çилхӳне.

Тӳпен канăçлăхне эс шырамастăн, харсăр
Канăçлăхра ырри мĕн пултăр шухă хумсене?—
Кар кĕрешсе, кăпăкланса капăрланмасăр
Чăпăлтатса чакса чăммаççĕ тинĕс сăпкине.

Хум хыççăн хум, хум хыççăн хум... Сывлать-
мĕн тинĕс!
Ахах-мерчен чулсем тухаççĕ хумсемпе пĕрле.
Хăватлă хум пек, сăвă-юрă, юхса кил эс!
Йăлтăр хумлăн йăнтăр-янтăр янрасам,
кĕсле!

Çĕн юрăпа татах эп килĕп, савнă тинĕс.
Мерчен пĕрчӳсене сапалăн чуллă çырана.
Каллех сиктерĕ-ши шур парус карнă кимĕ
Инçе-инçе çĕртен килсе ĕшеннĕ ывăлна?

## УЧИТЕЛЬНИЦĂНА

Хĕвел ури кĕрет чӳречерен,
Урам тулли кулать хĕвеллĕ март.
Эс портфельпе класа пырса кĕрен,
Юратнă çывăх çын — вĕрентекен.
Сан портфелӳ — куштан портфелĕ мар.

Кивелнĕ сводка мар сан портфелте—
Шкул ачисем пăхаççĕ куçунтан.
Пĕри тырпул ӳстерĕ уй-хирте,
Тепри хула ӳстерĕ Çĕпĕрте,
Профессор пулĕ виççĕмĕш ыран.

Вĕрентекенĕм, çывăх çын, аппа,
Теприншĕн эс пĕртен-пĕрех анне...
Нумайĕш кайнă, уйрăлнă санпа.
Чун-чĕререн йăлкăшакан вутпа
Эс ăшăтса ӳстернĕ вĕсене.

Утса тухсан эс аслă урама,
Ватти-вĕтти хисеплĕн пуç таять.
Эс хăнăхман авал хисеп курма.
Çĕршыв чыслать паян хĕрарăма.
Хĕрарăм ячĕ — ăраскаллă ят.

Хĕвеллĕ март... Илемлĕ çуркунне...
Вĕрентекен аппаçăм, уявла паян!
Пĕрле пухасчĕ сан тĕнче çине
Шкултан вĕçтернĕ ывăл-хĕрсене—
Эс мĕн тери телейлĕ те пуян!

—

## ИНКЕ

Инке пӳртре ҫӑм ҫип арлать,
Урайӗнче чупать йӗке.
Тӑман тапранчӗ кӑнтӑрлах,
Пуҫ ҫаврӑнать ҫил йӗнипе
Ҫӗрӗпе.

Ҫил йӗнипе йӗмест инке,
Сӑлтавсӑр ассӑн сывламасть.
Инкеҫӗм тӳснӗ инкеке
Текех ан пӳртӗрех курма
Никама.

Ҫил-тӑманра та ҫумӑрта,
Ҫӗрле те, кашни ирхине
Хыпар кӗтсе эс пурӑн та—
Ӗненӗн-и тус ҫуккине,
Вилнине?..

Анчах ӗнен, хӑть ан ӗнен—
Ун упӑшки утмасть ҫумра.
Пӑхмасть ачашшӑн куҫӗнчен.

Пытарнӑ вилнӗ паттӑра
Вӑрҫӑра.

Пӗчченсӗ тӑвӑлнӑ чухне
Хӗрарӑм чунӗ ҫемҫешке.
Пӑхать те ывӑлӗ ҫине
Куҫҫулленсе тухать инке
Ҫенӗке.

Тӑман йӗрет те кӗвӗҫет,
Улать чарусӑр ҫил-тӑман.
Шавлать, кӗрлет пӗр кӗвӗ ҫех:
Сыхланӑр юнлӑ вӑрҫӑран
Хӑть хӑҫан.

Ан пултӑр ҫын мӑшӑрсӑрри,
Вӑрҫӑра мар телей — ӗҫре.
Тӑванлӑх, туслӑх, мир юрри,
Ялав пултӑр пур ӗмӗре
Тӗнчере.

Йӗмест инкеҫӗм. Чӑмӑртать
Ӗҫпе хытарнӑ аллине.
Хаяр тӑман, ҫил-ҫумӑр та
Хӑрушӑ пулмӗ малашне
Инкене.

---

## ТĂВАНКАССЕМ

Поэма

### ҪĂКА ҪУЛҪИ ҪАП-ҪАВРАКА— МĔН КАЛАСА, АЙ, ҪЫРНĂ-ШИ...

Сад пахчинче ҫавра сĕтел,
иккех мучи ун ик енче.
Шерпет кăшт тутанаҫҫĕ те
ҫапаҫҫĕ халапа темччен.

Ҫавсем ҫинчен сăмах-юмах
пуҫлар-ха, тусăм-вулакан.
Пĕрне пит ҫăмăл паллама:
Сăн-пичĕ унăн ҫавраka,
кăвак сухал кăтрисене
лекмен-тĕр хачă тахҫанах;
йăл куҫĕсем хăна ҫине
пăхаҫҫĕ тем сăнанăнах.
Тяпук мучи вăл. Ĕшнене
хурт-хăмăр вĕҫтерет куллен.

Шанать: ҫанталăк чĕлхине
халь ҫук ун чухлĕ пĕлекен.
Кунсем хăҫан уяртасса
калать сана эрне малтан.

Çитес çул тырă ăнасса
курсах тăр, вăл калать пулсан

Вăл ватă, теççĕ, çитменне
çултан та тухнă... Калĕçин!
Ĕçлет, тăвать мĕн пĕлнине.
Вăл — колхозра хисеплĕ çын.

Ахальтен мар-тăр яланах
ăна яш-кĕрĕм кăмăллать.
«Самай вĕреннĕ пулсанах,
профессор,— теççĕ,— пулмалла!

Мĕнле телейлĕ вăл паян!
Савса çĕклет тав куркине.
Ик-вичĕ çул хушши курман
юлташĕ килнĕ ун патне.

Вăл Туймаза таврашĕнчи
çĕн хулара пурнать иккен.
Назарпала Тяпук мучи
юлташлă, туслă ĕлĕкрен.

...Хурăнлăхри варта пĕччен
çӳрет Назар. Хăй лутака.
Мăкăрланса çĕр айĕнчен
тĕтĕм тухать палка-палка...

Ĕçлет мучи, кас-кас юрлать,
вăл çăра тикĕт юхтарать...
Ун ячĕ тикĕтне пулах
янравлă пулнă таврара.

Ăна çынсем куратчĕç те:
«Назар Макарч,— тетчĕç,— салам!
Ак кур, эс тунă тикĕте
туянтăм. Шеп, мухтамалла!»

Çырла пиçсен, ял хĕр-каччи
сĕм вăрмана яратчĕ ян!
Хăй хӳшшинчен Назар мучи
тухатчĕ те, вара ялан
чи шурă хурăн хуппинчен
тăватчĕ сулă е пурак:
унтан, яш каччă умĕнчех,
суйлатчĕ хĕр ушкăнĕнчен
чи хитрине, сăнне кура
парне паратчĕ. «Қулăрах!..»

Çĕрле Назар хӳшши патне
килсен выртма ачи-пăчи,
савăнтармашкăн вĕсене
юмахĕ хатĕрччĕ мучин...

Вăхăт шăвать юмахласа.
Чĕлĕм пĕрмай мăкăрланать...
Çапла: ик вată тĕл пулсан,
аса илмелĕх тупăнать.

* *
*

Қилĕштерсе пĕрне-пĕри,
ялан пĕрле, пĕр тăванла
пурнас пулсан, этем ĕмри
яка шăвать-мĕн тăвалла.

Назарăн ывăлĕ — Юман,
Тяпукăн хĕрĕ — Кĕтерне
пĕлсех пуль ӳсрĕç ачаран
савăнтарма ваттисене.

Сумка çакса ялти шкула
çӳре пуçларĕç вĕренме.
Пуçтарчĕç ăс-тăн çамрăкла
чăн-чăн çынсем пулса çитме.

Назарпала Тяпук вара,
вĕсем çине пăха-пăха,
хĕлле, хăй çутнă вăхăтра,
çапатчĕç тĕрлĕ юмаха.

Пит хăвăрт ӳсрĕç çамрăксем.
Сăнран — хитре, чунпа сăпай.
Çамрăклăхра — мĕнпур илем,
ӳсес çынра телей нумай.

Шкултан тин çеç тухнăскерсен
ĕмĕчĕсем ыр тĕлĕкрен
хитреччĕ, пысăкчĕ вĕсен!
Анчах пĕрре, кĕтмен çĕртен...

Садсем ешернĕ вăхăтра
(ăна манмасть ватти-вĕтти!)
вут çиçĕм çиçрĕ анăçра,
кĕрлерĕ вăйлă аслати.

Тин каччă пулнăскер, Юман
шур кĕпине çар тумĕпе

улăштарма Тăванкасран
уттарчĕ вăрçă çулĕпе.

Хĕре хăйса чуптăвайман
çамрăк салтак тутисене
çуркалантарчĕ çил, тусан,
Хытарчĕ ун çемçе чунне!

Кăвак куçсем хаярлăха
пытармасассăн та, чĕре
манман, манман самантлăха
Тăванкасри чипер хĕре.

Пĕрле вĕреннĕ чух темме
юратăвне вăл палăртман.
«Савни, саватăп-çке»,— теме
именнĕ çамрăк: ах, айван!..

Çĕнтерӳпе таврăнсанах
каясшăн пулчĕ вĕренме.
Вăрман та унтанпа (сăна!)
шăп виç хут тăкрĕ çулçине.

— Нефтяник халĕ ман Юман
Пушкăртстанри çĕн хулара...
Çук, çук, Тăванкаса манман,
ерçмерĕ çеç ку хушăра.

Пĕлесчĕ сан: хули вара—
çатма пекех урамĕсем;
курасчĕ сан: хула тавра
нефть вышкисем, нефть вышкисем!

Курпун тусем ҫинче ҫёрле
кун ҫутинчен ҫутă пин хут.
Пырса курсан, Тяпук, эс ху
шалтах, шалтах тĕлĕнмелле.

...Пĕри мухтанчĕ хулипех,
тепри ялнех мала хурать.
Ҫӳле ҫĕкленнĕ уйăх çех
вĕсем ҫине пăхса кулать.

Тулли курка тĕпне ӳксе
авкаланать, хуҫкаланать,
шурăмпуҫне вăрах кĕтсе
хуллен-хуллен шупкаланать.

— Хĕр-ывăлсем хисепсĕр мар.
Вĕсем ҫинчен те кăшт пуплер.
Пĕри хирте ĕҫлет хастар,
тепри — нефтяник, инженер.

Пĕрле ӳснĕ ик ҫамрăка
пĕрлештерме май пулмĕ-ши?
Ҫăка ҫулҫи ҫап-ҫавракa—
мĕн каласа, ай, ҫырнă-ши...

## АХ, МА КĔСКЕ-ШИ ВĂЛ-ЯШ КАҪĔ АХ, МА ВĔРИ-ШИ ХĔР ЧĔРИ..

Чипер хĕрсен юрри аван,
хут купăс ҫепĕҫ кĕвĕлет.
Ҫурхи хавaслă уява
кашни хăй мĕн илем кӳрет.

Ташлаççĕ — чăрсăр çил вылять,
юрлаççĕ — кăмăл çĕкленет.
Савнийĕн ячĕ — ырă ят
такмаксерен пĕр илтĕнет.

Ķалаçаççĕ пурте: «Ķĕтерне.
Тăванкасра вăл ман пĕрре?..
Малта-тăр ку хĕр, ахăртнех,
вăйăсенче, хĕрӳ ĕçре...»

Ķаçпа вăййа вăл килессе
ялти пур çамрăк та кĕтет;
ун çӳçĕ пек пулас тесе,
пин хум кăтран юхать хирте.

Ун йĕкĕр куçĕ тĕм хура—
пăхсассăн илме çук куçа...
Чипер сăнне, пĕвне кура—
хĕр кăмăлĕ те уçă çав.

Юман ăна чĕнсе илсе
сăмах тупмарĕ калама.
Пĕр урамра пĕрле ӳссех
мĕн-ма çапла-ши вăл, мĕн-ма?..

Вăл манчĕ вăйă пуррине,
куç умĕнче Ķĕтерне çеç...
Вăл манчĕ каçăн илемне.
Пуçра вăл çеç, ăшра вăл çеç...

Ташлаттарма сар хĕрсене
ял вăйăçи пур — Кириле.

Паян вăл вăйă картине
аккордеон йăтса килет.

Анчах тухмаççĕ ташлама,
такăрламаççĕ çереме.
— Хĕрсем, ма тухрăр урама?..
— Купăсçăна кӳлештерме!..

— Ма ташламастăр-ха эппин?
Ан тăрăр-ха кутăнлашса!
— Кулать тата, ах, çиçтепи,
епле ташлар пĕлмен ташша?..

— Культура çук, çав чух сире...
Каяс киле... Час ир килет,—
чăлт сурчĕ те шăл витĕрех
пăрăнса тăчĕ Кириле.

— Эс ял такмакĕсем кала!
— Кала, çĕр çĕмĕрсе ташлар!
— Кунпа пулмасть, ку — урăхла,
аккордеон — хут купăс мар...

Хĕрсем кулаççĕ: «Эх, ăнман,
каппайчăк,— теççĕ,— пуш арпа!
Ытах пăхсассăн юнтарма
купăсна çак та — яра пар».

Питех çиленчĕ Кириле:
— Тухмастăп,—терĕ,—ӳлĕмрен.
Сире пĕр хĕлĕхлĕ кĕсле
ан кирлĕ пултăр — курăп, тен...

«Ӑунта ларса мӗскер усси?»—
тесе каясшӑнччӗ киле,
анчах илемлӗ хӗр сасси
йӑвашшӑн чӗнчӗ: «Кириле...»

Чим, Ӑӗтерпен сасси-ҫке ҫак,
епле итлемӗн вӑл сасса?
Ма Кирилен чӗри хавшак?
Вӑл мӗншӗн ӳкрӗ хыпӑнса?..

Ахаль чухне Кирилерен
хӑюллӑ ҫын ҫук темелле—
антив, ҫил вӗртӗр ҫурҫӗртен—
Ӑартуспала ҫӳрет хӗлле.

«Епле шӑнмаҫҫӗ хӑлхусем?»—
тесен, «культура»— тет вара.
Авалхилле бакенбардсем
мӑкланнӑ ун хӑлхи таран.

Тӳрех калар калассине:
Вӑйӑа тухсан та выляма,
чӗри кама юратнине
вӑл систермен-ха никама.

Ҫак «шукӑль» каччӑ Ӑириле
хӑш чух именнине кура,
сисмен ҫӗртен ҫын сисмелле:
ачи ҫунать юратура...

Ӑӗтерпепе Юман пӗрле
ҫӳренине курсассӑнах,

пит кӳренетчӗ Кириле:
«Ҫакланнӑ,— тетчӗ,— куршанак!»

Анчах вӑл халь хут купӑсне
сӗнсе тыттарчӗ Юмана:
— Ял хӗрӗсем ташланине
курса ларам, пулам хӑна.

Юман чӗрҫи ҫине ҫитсен,
Чупкаласа, шукаласа
ун пӳрнисем вӗлтӗртетсен,
чун кӗчӗ те хут купӑса.

Кӑтӑкланать ачаш чӗре,
тӑпӑртатса илет ура.
Эх, ҫил тухать те ҫил ҫӳрет
вӗл-вӗл кӗпе арки тавра!..

Ҫил ҫӳремест сар хӗр тавра—
ҫӗмӗрттерет каччи ташша!
Йӑтсах каясшӑн-ши вара
ҫав ӑмӑрткайӑк акӑша?!.

Янра, хут купӑс, ан ӳркен,
халь вӑхӑт пур-ха выляма;
кур: алтӑр ҫӑлтӑр ӳпӗнмен,
вӑл шутламасть-ха тӑкӑнма...

Юманӑн кӗввисем пит шеп,
пит килӗшрӗҫ яш-кӗрӗме.
Пӗр Кириле ҫеҫ кӳлешет,
хӑймасть вӑл ним сӑмах чӗнме.

* * *

...Саланчĕ вăйă. Пытанаççĕ
юратнисем пĕри... тепри...
Ах, ма кĕске-ши вăл — яш каçĕ?
Ах, ма вĕри-ши хĕр чĕри!?.

Ав, тухăçра тӳпе питне
кас-кас ӳкет яр çутă шуçăм.
Куç сиктермесĕр ун çине
Юман пăхса илет пыруçăн.

Унта хула, унта пурнаççĕ
Юманăн çывăх тусĕсем.
Тăванкасран пăхсах курнаççĕ
вĕсем халь çутнă çутăсем.

— Юратнă ялăм — Тăванкас,
илемленетĕн-çке куллен эс.
Сан çĕрӳнте нефть тухĕ час,
газ çунĕ, вышкăсем çĕкленĕç...

— Эх, Кĕтерне, пит хăвăрт çитĕç
пулас кунсем... малашнехи...
Тата тем-тем каласшăн питĕ
Юманăн кăмăллă чĕлхи.

Анчах именчĕ савнирен,
Кĕтернерен Юман вăтанчĕ.
Кăвак чаршав пек тӳперен
шăрça пек çăлтăр юхрĕ анчĕ.

Хĕр пичĕ куççульпе йĕпенчĕ,
тем хĕстерет-çке кăкăра.
— Çулсемĕр пирĕн пит юпленчĕк:
эп колхозра, эс хулара...

— Çук, çук, савниçĕм, апла мар,
вара ку пирĕншĕн чăрмав-и?!
— Қаçар, тăванăм, ална пар,—
çапла вăл хĕр тенин тăрлавĕ...
— Ăнлан: ютсен çулĕ пĕр мар,
туссен вăл — ĕмĕр юнашар!..

Қалинккерен сад пахчине
кĕрсе çухалчĕ шурă тутăр
Ан мантăр сар хĕр каччине,
ир тĕлĕрме выртсан та куртăр!

Юман тăхтарĕ кăшт, итлерĕ:
хумханчĕ, сирĕлчĕ вĕлтрен—
ик пĕчĕкçĕ мĕлке вĕлтлетрĕ,
куç умне тухрĕ тĕттĕмрен.

Çарапуçах, çарауран
тăраççĕ кӳршĕ ачисем.
Шăпланнă тĕлĕрнĕ урам,
ма çывăрмаççĕ-ха кусем?

Қалаççĕ хайхисем çапла:
— Ним те курман эпир... çĕрле...
Эпир суймастпăр: хурала
пире хăварчĕ Қириле.

«Юри кăна, тен, Кĕтерне
манпа пĕр каç, ирттерчĕ пулĕ...
Ăçтан пĕлес хĕр шухăшне?
Çивĕчĕсем хĕрсен ик юплĕ».

Хыпарçăсем ак сиккипе
тĕттĕмелле кайса çухалчĕç.
Чĕре çунать вут хыпнă пек,
вăл кĕвĕçет, куç ун хуралчĕ.

Эппин пĕр каччă кӳлешет,
саваççĕ иккĕн пĕр хĕре.
...Хут купăс тем ӳпкелешет—
те хурланать вăл, те йĕрет...

### ... ХĂМА ÇИНЧЕ ШУЛТРА ÇЫРУ: „ДЕВОН ПРОСПЕКЧĔ"

Чечек çинчи хурчĕсемпе
мăкăртата-мăкăртата,
Тяпук мучи мĕн иртенпе
пĕччен ларатчĕ утарта,

ял почтальонĕ Кĕркури
ăна çыру килсе тыттарчĕ.
Хыпар ярать-мĕн хулари
Юлташĕ ун — Назар Макарччă.

Назар çырать-мĕн ак çапла:
«Аван пурнать-и, савнă çыннăм?
Яка тухманшăн ан ятла—
эп çыруне ик-виç хут çыртăм.

Килсе курсамччĕ пĕреххут,
тусна манатăн — кăмăл юлчĕ.
Çула тухмашкăн пур-тăр ут—
Тăванкассен çунатлă учĕ.

Назар мучимĕр кунсерен
хула ӳснишĕн хĕпĕртет-мĕн.
Çапла вĕçлет юлашкинчен:
«Шур хут çине йăлтах кĕртеймĕн.

Ват кăмăла эс ан хăвар,
килсе курсам вăрахламасăр».
Йĕрке йĕрне пĕртте пăсмасăр
алпуснă: «Сан тусу — Назар».

Кайса курас-шим чĕннĕ чух,
кĕтет пуль çав Назар Макарччă.
...Пĕр ирхине ирех Тяпук
хапха умне лаша кăкарчĕ.

Хул хушшине ял кучченеçĕ
хĕстерчĕ те хайхи Тяпук:
— Каяс-ха,—терĕ,—пит чĕнеççĕ...
Çул вăрăм мар, халь ĕç-мĕн çук.

Тилхепине карт! туртрĕ те
укăлчаран тухса та кайрĕ.
Ялтан çул пăраннă тĕлте
шур хурăн курăнчĕ — пуç тайрĕ.

* *
*

Çанталăк ăшă та тӳлек.
Ялсем пытаннă сулхăна.

Тяпук умне кив тӗлӗк пек
тухса тăрать кив самана...

...Нумайччӗ халăх пасарта.
Сутатчӗҫ пушăт, чашăк-тирӗк...
Тяпук суйларӗ ҫăпата,
пӗр алтăр йӳҫӗ турăх ҫирӗ.

Вăл ҫамрăкчӗ — вунтăххăрта,
ҫапах ҫӳре-ҫӳре йăлт супрӗ.
Сасартăках умри сăрта
мӗнпур пек халăх пурте чупрӗ.

— Ăҫта чупаҫҫӗ?— тет Тяпук.
— Ат каракнă анда тăткан, ди*.
Хайхи пасарăн речӗ ҫук,
ҫурхи шыв хумӗ пек хусканчӗ.

Ак йышлă халăх умӗнче
тăрать этем, таса та вăрăм.
Пурин те куҫӗ ун ҫинче,
калаҫҫӗ пурте: вăрă... вăрă...

Ун питӗнчен, тăнлавӗнчен
типсе ӳкмен-ха юн кӗсенӗ.
Ак халӗ те мӗнпур енчен
ăна хӗсет ҫава та сенӗк..

Ҫук, вăл чакмарӗ каялла.
Ун урлă вăркăнчӗ чукмар.

---

* Унта лаша вăррине тытнă, тет (тутарла).

Анчах вăл кăшкăрчĕ: «Алла!..
Ан тивĕр, эпĕ чунсăр мар! .

Ман харсăр чунăм тухиччен
манран сире пур пысăк парăм:
Қалам сире хам ĕç çинчен—
камран, хăçан мĕскер вăрларăм...»

— Итлер-ха!—терĕç сасăсем,—
пиртен ăçта тарса вăл кайĕ?
«Мĕнле тарам, мĕнле вĕçем?»—
тесе пăхать аманнă кайăк.

Чи малтанах тăрăхласа
куç хĕсрĕ ватă муллана.
Қаларĕ вăл: Итле, Хамза,
вилсен, çăтмах кĕтмест сана.

Қаларĕ вăл: «Хамза-муллан
пĕр арăмĕ ман чун савниччĕ.
Ăна Хамза ултавпалан
ирĕксĕрлерĕ, сутăн илчĕ...»

Қаларĕ вăл: «Хамза — пуян,
ăна хĕсмен çук пурнăç терчĕ»...
Хамза хăмсарчĕ: «Эс — шуйттан!»
Хăранă куçĕпе тинкерчĕ.

Ик аллине чăмăрласах
хăй харсăр çын: «Этем эп!— терĕ.—
Ман çук кил-çурт та урхамах,
мана телей шăпи лекмерĕ.

Эп пĕтнипе макăракан
ача-пăчам та çук, пĕччен эп.
Анчах та ирĕкре пулсан,
хăрамăп эп, кĕрешĕп, çĕнĕп!»

Çав вăхăтра çĕре ларса,
кĕлтурĕ те çӳле пăхса,
вăл çĕтĕк атă кунчинчен
туртса кăларчĕ çивĕч çĕçĕ.
Куçа уçса пĕр хупиччен
çĕççи чĕри варне ун кĕчĕ.

Вилсе вăл выртрĕ самантрах,
сăрт çинче юлчĕ пĕр пĕчченĕн.
Куçне хупсассăн та, çаплах
кулатчĕ хăй теме пĕлтернĕн.

Те вăл кулатчĕ Хамзаран,
те пурнăçа вăл тăрăхлатчĕ...
Час манăçмарĕ вăл. Кайран
ăна юмах туса калатчĕç.

Çак шухăшсем вĕçленнĕ май
Тяпук мучин кĕскелчĕ çулĕ.
Хула хĕрне пырса тухма
пĕр виçĕ çухрăм юлчĕ пулĕ.

* *
*

Тĕлĕнмелле иккен кунта:
ăçта та вышка, тем вучахĕ.
Шутлать Тяпук: ак вăл ăçта
Назар хулин чамасар чапĕ!

Куçса çӳренӗ цыгансем
нихçан кун чул кӑвайт чӗртмен-тӗр.
Кӗлте пек пысӑк вучахсем
çунаççӗ çумӑрта сӳнмесӗр.

Умра шӑвать — çатма-и, тен —
вӗр-çӗнӗ çул. Вӑл çукчӗ ӗлӗк.
Вышки çине пӑхас тесен,
пуçран тухса ан ӳктӗр çӗлӗк!

Таçти-таçти урамсемпе
хуланалла мӗн кӗнӗçем —
Ем-ешӗл садӑн айккипе
карап пек пысӑк çурчӗсем...

Пасар урамӗ тӗлӗнче
Назар çуртне Тяпук пӗлетчӗ;
анчах унта, хӑма çинче,
вулать мучи: «Девон проспекчӗ»

Шырарӗ вӑл Назар тӗлне,
ун тӗлӗ пур та, çурчӗ çук.
Аптрарӗ, чарчӗ лашине.
Çук, ӗненмерӗ-ха Тяпук.

Куç-пуç арпашнӑ сӑлтавпа
пӑртак аташрӑм пулӗ, терӗ.
Çук, йӑнӑшман: ав, чул юпа,
ав, леререх курнать кӗперӗ.

Урамӗнче лаша чарса
хытса тӑма кунта хушмаççӗ —

Кĕр-кĕрлесе те кăшкăртса
машинăсем пĕрмай чупаççĕ

Назарăн çурчĕ вырăнне
вăл лашине пырса кăкарчĕ.
Пăхăр эрешлĕ чĕлĕмне
енчĕкĕнчен туртса кăларчĕ.

Ӳпкелешет Тяпук хуллен:
«Кĕтсе ларни те кăлăхах-тăр.
Ку намăса çын куриччен
аçа кăна çапса пăрахтăр!»

Пĕлмен çĕрте çӳре-çӳре
халь Назара часах тупаймăн.
Вăл куçнă çĕнĕ хваттере—
ку хулара çĕнни нумай-мĕн.

Тăрать Тяпук. Чуна пит тăвăр.
Юсакалать ут таврашне.
Вăхăчĕсем ытла-çке хăвăрт
шуса иртеççĕ ку чухне.

Васкас пулатчĕ-мĕн чĕнсен,
ма ырана хăвармалла?..
Ăçта ӳкессине пĕлсен,
çĕре тӳшек те сармалла.

Пĕр самантра хăй хăнана
килни çинчен манса кайса,
кил еннелле вăрт-варт кăна
пăрса хурать тăрантаса.

— Ыр лашана ывӑнтарса
хӑна пуласшӑн ҫӳреме
эп ӳстермен-ха, иҫмасса,
шур сухала, ҫак пӗвӗме!

Мыскарана ҫын пӗличчен
киле часрах ҫитни аван,—
Тяпук ӑшчик пӑшнипелен
тухсах каятчӗ хуларан,

анчах пӑртакҫӑ пуҫ тавра
шухӑшласа, тӑна кӗрсен:
— Ҫаяс-ха,— терӗ,— кантура,
ӑна унта пӗлеҫҫӗ, тен...

Чӗлхе-ҫӑвар этемсене
ҫитерӗ, теҫҫӗ, Киевах,—
Тяпук мучи нефть кантурне
пырса кӗрет хӑюллӑнах.

Ҫӑвак сухаллӑскер, пӗри
(хӑйпе пӗр тантӑш-и элле!)
паллашрӗ ыррӑн ҫав тери,
иртмешкӗн сӗнчӗ тӗпеле.

Тяпук вара хӑй нушине
йӑлт каласа пӗтериччен
ҫав ҫын мӑшӑр хура куҫне
илме пӗлмерӗ ун ҫинчен.

Телефонпа пӗрре кӑна
шӑнкӑртаттарчӗ хайхискер.

Ыйтать пулас вӑл Юмана:
— Ӑҫта-ши,— тет,— ҫав инженер?

Каларӑ хыҫҫӑн трубкине
илсе вӑл хучӗ иплӗн ҫех:
— Паян ирпе хӑйсен ялне
вӑл кайнӑ, терӗҫ, ашшӗпех.

Тяпук чӗнмерӗ пӗр сӑмах.
Мӗскер тӑвас? Каяс ялах...
Ҫула тухман ҫын тухсанах...
тӑман тухать иккен, чӑнах!

## ТЯПУК МУЧИ ТУРТИСЕНЕ ТӐРАТРӖ КУТӐН ҪАВӐРСА

Ни карчӑк ҫук канашлама,
ни чӗлӗмӗн хӑвачӗ ҫук...
Шухӑшсене сирсе яма
нимпе пӗлмест хайхи Тяпук.

Ара, мӗн пулнӑ Тяпука?
Ма шутламасть вӑл туй ҫинчен?
Ма сивӗннӗ пӗр тӑруках
пулас пӗртен-пӗр хӑтинчен?..

...Тяпук ӗнер каҫалапа
ҫӗн хуларан килсе ҫитсен,
темле пӑтранчӑк кӑмӑлпа
килсе кӗретчӗ хапхинчӗн,
курах каять пахча хыҫне
ик-виҫӗ трактор пынине.

Ҫынсем те килнӗ машинпа,
лартаҫҫӗ тимӗр кӑмака...

Хӑй киленче мӗнле шӑпа
кӗтет-ши пирӗн Тяпука?

Юман Назарччӑ та таçтан
сиксе тухать старик умне.
Тӑсать ик-виçӗ утӑмран
пӗрне çеç мар, ик аллине.

Тяпук чӗнмест. Енчӗкӗнчен
илет те чӗлӗмне хыпать.
Хыпать те... шӑрпӑк çутиччен
унта тапак хума манать.

— Телей, Тяпук мучи! Ташла!..
Тӑванкасра-çке чи малтан
сан пахчунта нефть тухмалла!—
савнӑçпа çиçет Юман.

Чӗлхесӗр пек хытса тӑма
пултараймарӗ ватӑ çын:
«Çунать чӗрем ахаль те ман,
эс вут çине ан сап краççын...»

Пытараймарӗ çиллине,
— Ан вӗç-ха, эсӗ,— терӗ,— чим,
нефть тухасси-тухмассине
хамран ыйтма пулмастчӗ-шим?

Юман хаваслӑ кӑмӑлпа
ӗнентерет ӑна çапла:
— Кунта геологсем юпа
лартса хӑварнӑ. Ак вула...

Тяпук мучи туртисене
тăратрĕ кутăн çавăрса.
Кĕтме пулатчĕ ун чухне
мучи тем те пĕр каласса.

— Итле, эс сикнĕ сăпкана
кам тунăччĕ хурамаран?
Тяпук кӳршӳ хальччен сана,
Юман, юратнă — хурламан.

Ăна манма юрать-и-ха?
Ма ват çынна хисеп-чыс çук?
Эс ан кĕçен, юпах тиха,
турта курман-ха, — тет Тяпук.

Туяланса килет Назар,
ун пуçĕнче çĕн шĕлепке:
— Мĕн харкашатăр пит хаяр?
Юман, ан тив-ха старике.

Назар Макарччăна Тяпук
вăрах тăрсан тин алă пачĕ:
— Çапла ӳсет-мĕн сан чапу...
Манран-и санăн кулмаллаччĕ?!

Ыр вырăнта çуралнă эп,
ыр вырăнтах вилесчĕ ман.
Эсир мана кун пек хисеп
кăтартасса эп шутламан...

Назар мучи те чĕмсĕр мар,
сăмах айне пулать-и-ха!

— Апла эппин эпир начар...
Ман ывӑлӑм — юпах тиха!

Пӗлетӗн-и, эпир санпа
ик сӳткеленчӗк — ватӑ супнӑ.
Тяпук, Тяпук... ват пуҫупа
тата кама вӑрҫмашкӑн тупнӑ...

Ачи, ав, нефтьшӗн тӑрмашать,
сан пахчунта нефть пулмалла.
Тяпук калать: эх, тамаша,
мӗн нефчӗ пултӑр, пур хӑмла...

Назар татах ӑна пӳлет:
— Мана кирек те мӗн кала—
ҫӑвар тути кӑна пӗтет,
чакмастпӑр пурпӗр каялла.

Пит ҫиленсе шӑртланчӗ леш,
чӗтретрӗ шӗвӗ сухалне:
— Манпа текех эс ан ермеш,
ан мӑшкӑлла Тяпук ятне.

Э, пулас ҫук ӗнтӗ сана
Тяпукӑн хӗрӗ сарӑ кин.
Ҫыртма тӑрсан та, чавсуна
ҫыртаймӑн ӗнтӗ халӗ тин.

Назарӑн та сӑмахӗ пур,
Тяпук вӑрҫни мӗн япала!
— Кӗнекӳне уҫса ан хур,
ҫырманнине эс ан вула...

Хăта, пуç çапмăпăр вара,
тавра ялти хĕрсем пĕтмен.
Çӳпçи — хупăлчине кура
тесе каланă ĕмĕртен.

Çитет сана, хăвна пĕлсен,
эс хăвăн хĕршĕн ан тавлаш.
Эй, хуранта хур пуç пиçсен,
хура кушак та хурăнташ!

Ăçта унта Тяпук мучин
ятлаçнине тек итлесси!
Çырма енчи лутра мунчин
чĕтрет тăвата кĕтесси.

Машинăсем кĕрленипе
выляççĕ вак хумсем шывра.
Савăннипе, тĕлĕннипе
ташласшăн тайăлнă йăмра.

* *
*

Чун тарăхне пĕр никампа
уçса пама пĕлмесĕрех
Тяпук уттарчĕ урама—
çунмаллипех çунать чĕре:

«Пулмасть пуль тусĕпе Тяпукăн
пĕр сак çинче те ларасси.
Ӳкĕтлеме чĕлхем ман чухăн,
ӳпкелешсен те çук усси...»

Çил кăларса, хыпаланса
чупать ун хыççăн Кириле.
Пĕрер çынни ятарласа
ăна ĕç хушнă темелле.

Вăл пит юрасшăн Тяпука.
— Хуйха ӳкмешкĕн ир-ха,— терĕ,—
леш Юманне калатăп-ха,—
ялта ăна мĕскер çитмерĕ.

Çӳрет пăсса çын пурнăçне.
Пит кутăн çав Назар таврашĕ.
Ăна савмарĕ Кĕтерне—
вăл çавăнпа халь тавăрасшăн.

Шăп пычĕ-пычĕ те мучи,
тăп чарăнса çапла каларĕ:
— Тата мĕн тесшĕн, шăкăлчи,
эс те кĕрӳ пуласшăн мар-и?..

Ĕçне ĕçлесчĕ лайăхрах,
вара манпа килсе калаç.
Ăсу-пуçу măскал çукрах,
чĕлхӳ кăна сан çич хăлаç!

— А сирĕн чĕлхĕр вĕлтĕрен.
Тек калаççан тата тем курăн,—
сăмахĕ çĕтрĕ Кирилен,
аптранипе çыртать тип курăк.

* * *

Хĕлхем хыпмарĕ çăвара
Тяпук мучи яра кунах.

Тискер çӳрерĕ, пуç тавра
сĕм пĕлĕтсем капланнăнах.

«Хурт-хăмăрсемшĕн пит начар
пулать-çке вышкăсем килсен»...
Куç умĕнчен каймасть Назар,
тухмасть ик шухăш пуçĕнчен.

Пĕр шухăшĕ калать çапла:
«Çумма пĕр вышкă ларнипе
Тяпукăн пит савăнмалла».
Тепри калать: «Нефть шăршипе
пуçна ан çавăр-ха, Тяпук,
колхоз пек ырлăх урăх çук.

Мĕнпур енчен тăван яла
хупăрласан нефть вышкисем,
вара ун чух мĕн тумалла,
мĕн ĕçлĕç ылттăн аллусем?

Назар çуртне куçарнă пек
çуртна та час куçарĕç, тен.
Ват йăмрапа яштак тирек
юлĕç ларса çара çĕртех...»

Вырăнĕнче ларинччĕ çеç
кил-çурчĕ ĕмĕр иртиччен.
Ан пистĕрччĕ чĕвĕл-чĕкеç
лутра лупасĕ айĕнчен.

Кунта-çке вăрăм ĕмĕрте
тăрмашнă ун аслашшĕ те,

ун ашшĕ те хресчен ĕçне
вĕрентнĕ пĕчĕк ывăлне.

Теприншĕн вăл нимех те мар,
анчах Тяпукшăн пит паха:
Çак вырăнти турат-тымар
килет иккен йăхран йăха.

Қартишĕнчи шыв валашки,
хăмлаллă шурă шĕтĕрнек
хальччен пулманччĕ ытлашши,
ак сикрĕ-тухрĕ пĕр инкек!

Қĕтернепе çак каçхине
Тяпук калаçрĕ ик сехет.
Вĕсем мĕскер калаçнине
сехет куккукĕ çеç пĕлет.

Тяпук мучи Қĕтернене
мĕнле пăхса ӳстернине
хăй мухтанма юратманран
калать пĕр-ик сăмахпалан:

— Қолхоз çын турĕ,— тет,—эртель...
Эс пăх-ха хăвăн çинелле.
Ну, кам сана çак çут хĕвел—
Тяпукăн хĕрĕ, темелле?

Мĕскер çитмест ĕнтĕ сана?
Вĕрентĕн лайăх — вунă класс.
Эс ăнлантар ват аçуна:
колхоз пĕтсен, ун мĕн тăвас?..

Куратӑн, пирӗн пахчара
мӗн хӑтланаҫҫӗ. Ӗç начар...
Хуллен-хуллен пурсӑмӑра
çыран айнех тӗртет Назар.

Вӗт ун ачи манран кулать!
Тӗсне-мӗнне хам кил-çуртра
тек курам мар — хӑйнех кала:
ан явӑнтӑр вӑл сан тавра.

Хам хӗрӗме усал туса
эп пиллӗп-и савман çынна!—
Тяпук мучи хыт ятлаçса
тухса выртать шур чӑлана.

Выртма тӑрсан, курать Тяпук:
кӗтмесӗр вӑхӑт çитессе
пуçне кӑларчӗ те куккук
пӗр-иккӗ авӑтрӗ тӗсе...

Яр уçӑ кантӑк умӗнче
çаплах ларать-ха Кӗтерне.
Шур çӗмӗртсем сад пахчинче
тӑкаççӗ шурӑ çеçкине.

Тӑкмаççӗ çӗмӗртсем çеçке—
хӗр куçӗнчен тумлать куççуль.
Аттен сӑмахӗ йывӑр-çке,
кашни сӑмахӗ йывӑр чул.

Тулта çӗр тӗттӗм. Уйӑх çук.
Савни те çук паян çумра.

Хӗре каччисӗр канӑҫ ҫук—
мӗн усси пултӑр уйӑхра?

Садра сар кайӑк йӑвара
ларать пуль тутлӑн тӗлӗрсе.
Савниҫӗм, эсӗ асӑмра,
асӑмра ҫеҫ-и — чӗрере.

Чӳречере пур хӑй ҫути,
вӑл сӳнес ҫук ӗнтӗ ирччен.
Ҫук, илтӗнмест савни утти,
ҫук, хумханмасть кӑвак сирень...

Ак хӗр арки ҫине тултан
вӗҫсе ӳкет кӑвак конверт.
Ҫыру, ҫыру! Анчах камран?
Ҫӗр варринче халь кам ҫӳрет?

Конверт ҫинче сап-сар чечек,
ҫырӑвӗнче те чӑп-чӑпар...
Алли палланӑ алӑ пек,
анчах та ячӗ паллӑ мар.

«Ҫыру ҫыратӑп,— тет, хайхи,—
яка хута пӗр хуратса.
Хут хуратса та мар, савни,
сана чунтан кӑмӑлласа.

Эп юрататӑп-ҫке, туйсам,
пӑхсамччӗ эс ман еннелле.
Эс асӑмра чух эп нихҫан
курмастӑп ҫутӑ хӗвеле.

Чӳречене уҫса хурса
урамалла пăхса ларсам.
Ҫупăсăма туртса ярса
эп юрату юрри юрлам».

Нăртлатрĕ купăс пĕр хутчен
ҫав вăхăтра ял илтмелле...
Анаталла май пĕр-пĕччен
иртсе пырать-мĕн Ҫириле.

**ҪĂШТ ШУХĂШЛАСЧĔ ТУЙ ҪИНЧЕН,
ҪИЛĔШТЕРЕСЧĔ ПĔР ХĔРЕ...**

Йăмрасенчен те ҫӳлерех
ҫĕкленнĕ вышка патĕнче
паян ир, кĕтӳпе пĕрле,
хастарлăн тытăнчĕҫ ĕҫе.

Тăвата мăн кăмакара
кĕрлет вут-ҫулăм, тулхăрать.
Пĕри вара ҫав вăхăтра
пăс пăрăхне уҫса ярать.

Ҫотельнăйран ши! шăхăрса
каять вĕри пăс. «Ну, пуҫлар!»—
Манометр ҫине пăхса
йăл кулчĕ ҫамрăк кочегар.

Чĕтренчĕ вышка, ҫӳлĕскер,
блок тăрăх шăвăнчĕ канат.
Пит лăпкăччĕ кунта ĕнер,
паян хĕрӳ ĕҫ тапранать.

Ҫанталăк шăрăх кунĕпех,
пит сӳрĕккĕн ларать йăмра.

Тарланипе çӳç-пуç йĕпе—
шыва чăмасчĕ, авăра!

Витре тулли çырла татса
çулпа килеççĕ сар хĕрсем.
Нефтяниксем патне пырса
чунтан сĕнеççĕ: «Илĕрсем»...

Ма илмĕн-ха хĕр аллинчен
куç хĕррипе кулса парсан?
Вылясчĕ кăмăл туличчен
хĕрпе каччин вăййа тухсан...

Хирти ĕçрен килекенсем
никам чĕнсе хушмасăрах
пуçтарăнчĕç курма тесе:
«Чăнах, нефть пур-шим пахчарах?»

Пĕрне-пĕри пӳле-пӳле
пуçлаççĕ хыттăн шавлама:
— Кунтах тухать-шим, ай, телей!
— Тухать пуль çав ĕнтĕ, кума...

Пĕлменнине тĕпчес йăла
пайтах хальхи хĕрарăмсен.
— Ку мĕн тума? Мĕн япала?..
— Ма нефть тухман кунта
халиччен?..

Йăл кăна кулчĕ те Юман
63аларĕ хучĕ тĕлсĕрех:
— Сăмахĕ кайĕ вăрăма,
анчах ăнланмăр пурпĕрех...

Ятарласах эп тепĕр чух,
тен, вулăп лекци... май пулсан...
— Асту, юлаймĕ çӳç пĕрчӳ,
халех вула, вулас пулсан!

— Вĕреннĕ вăл çынран кулма!
Пире вăл «тĕттĕм» тет пуль-ха!—
хăлаçланса тухать умма
шкулти уборщица Улька.

Чечеклĕ шур тутăрĕпе
чĕркенĕ хăй ик-виç хаçат.
— Қала пурне те йĕркипе,
эпир итлетпĕр, хăямат!..

Шалтах аптрарĕ хай Юман.
Итлес пулать-мĕн халăха.
Тӳрех персе ярас пулман
пĕр тĕлсĕр-мĕнсĕр сăмаха.

Вăл ушкăнран аран хăпса
пĕр тĕмеске çине тăрать.
Ăнланмалла сăмах тупса
çын кăмăлне уçса ярать.

— Қалав пуçланĕ аякран.
...Миллионшар çул ĕлĕкрех
çак вырăнта тип çĕр пулман,
шавланă пысăк тинĕс çех.

Çав тинĕсри чĕрчун тĕнчи
хуллен-хуллен вилсе пырса,

пытаннӑ тинӗс тӗпӗнчи
хӑйӑрпала купаланса.

Ҫав вилесен юлашкинчен
нефть пулнӑ, теҫҫӗ, каярах...
Халь нефть сийне ҫитес тесен,
ҫӗре чавас пулать вӑрах.

Ӑнлантарать, калать, Юман
аппасене, инкесене,—
Патша чухне краҫҫын ыйтма
Раҫҫей те кайнӑ кивҫене...

Усламҫӑсем, ютран килсе,
ӑмсаннӑ ҫак пуянлӑха,
пайтах ҫаратнӑ пуль вӗсем,
хур тунӑ тӗттӗм халӑха...

Калав вӗҫленчӗ. Тӳперен
каҫ сӑнӗ ҫапрӗ катана.
— Тавах, Юман, тата тепре
килсе итлесчӗ-ха сана.

Ҫапла шавларӗҫ те темччен
саланчӗҫ пурте пахчаран.
Улька кӑна юлчӗ пӗччен,
— Юман, ларар-ха,— тет,— ларар.

Ларать Улька пуҫне пӗксе,
хӑй ним чӗнмест. Тен, вӑл йӗрет?
Шывланнӑ куҫ хӑрпӑкӗсем,
ачаш ҫӳхе тути чӗтрет...

Мĕн пулнă пирĕн Улькана?
Мĕскер ыйтасшăн Юманран?
Ларсан-ларсан, хуллен кăна:
— Ан тĕлĕн,— терĕ,— эс манран...

Эсир пĕри те юратма
пĕлместĕр пулĕ чĕререн.
Савни эп тупнăччĕ хама,
çын уйăрчĕ пĕр-пĕринчен...

Ман ĕмĕте татаканни
эс пултăн. Хуçрăн кăмăла.
Савни те пулчĕ айванни—
çил ăçталла — вăл унталла...

Ĕсĕклесех йĕрет хайхи,
тутăрĕпе куçне шăлать.
Чĕри варне хуйхи-суйхи
кĕрсе вырнаçнă-мĕн шала...

Хĕре тытса ик аллинчен
Юман калать: «Мĕн тесшĕн эс?
Эп çын çулне хальччен пӳлмен,
мана сан мĕншĕн ӳпкелес?»

— Эппин эс ма Кирилене
илсе каясшăн колхозран?
Куçатăп, тет вăл, нефть ĕçне...
Эс илĕртетĕн пуль, Юман...

— Ахаль калать пуль вăл, сăнать,
йăлăнтарасшăн, тен, Улька...

Шут шăрçинчен вăл каччăна
кам уйăрма пултарĕ-ха?

— Çук, çук, шанмастăп сăмахна,—
Улька куççулĕпех йĕрет,—
мĕн пулнă-ха апла ăна,
мĕн-ма вăл пăрăнса çӳрет?..

Сăмах чĕнмерĕ тек Улька,
тăрса пĕр сассăр алă пачĕ.
Сад айĕнчи тăкăрлăка
кĕрсе кайса куçран çухалчĕ.

* *
*

Кирилене хăй килĕнче
мĕн иртенпех ятлать ват амăш:
— Сана пула ял умĕнче
сăмах илтетĕп, чун çунтармăш!

Ват çынсемпе ĕретлĕрех
калаçмалла. Ан кайтăр ят.
Пĕр хăлхунтан сăмах кĕрет,
тепĕринчен вĕçсех каять.

Хут купăсна çутăличчен
турткаласа тек ан çӳре.
Сан шухăшласчĕ туй çинчен;
килĕштерес пĕр-пĕр хĕре.

— Кама илес вара, анне,
хама пĕри те савмасан?

Кўме кўлсе Силпи енне
хĕр вăрлама каяс-им ман?

Паян вăл çирĕм пиллĕкре
Паян шăпах ун менельник!
Анчах çын çук кĕрекере,
сĕтел çинче те çуккă ним.

— Ăшчик пăшать. Ăçта курка?
Тултар, аннеçĕм, ан шелле.
Ват амăшĕ лăрка-лăрка
кĕрсе çухалчĕ тĕпеле.

— Çынсем те писрĕç вĕт санран.
Ăçтан юраттăр Кĕтерне?
Эп ват пуçпа та чухлакан
сана вăл мăшăр маррине.

— Эх, мăшăр мар çав, мăшăр мар...
Эп ик кун çырнă çырăва
çурса пăрахрĕ чăр та чар.
Сўнтерчĕ ман юратăва.

«Тек вăхăтна сая ан яр»,—
тесех каларĕ... Мĕн тăвас?
Юман пĕтерчĕ çав, Назар...
Çĕр чавакан шăши, тыркас...

Тухса кĕрем-ха урама.
Хĕрсем пĕтмен-ха — ял тулли.
Вĕрентĕп эп манран кулма!
Курам, кам пулĕ ял кулли!

Крыльца çине купăссăрах
тухать ак хĕрнĕ Кириле.
Пуçне кайнах хаяр сăра—
тĕнче халь уншăн тӳнтерле.

Тулта çĕр тĕттĕм. Урамра
çилпе каш-каш кашлать йăмра.
Те сив пăра, те çумăра
тӳпе те çĕр пек тĕм хура.

Çил тусана шăлать çулпа.
Таçта-таçта, ял хыçĕнче,
такам вылять пек шăрпăкпа...
Кĕмсĕртетет пӳрт тăрринче...

Такамăн тĕнкĕлти тумри
сас пачĕ те çухалчĕ час.
— Çумасăр irттĕрччĕ çумри
Урамалла тухса пăхас...

Кĕтернесен кил-çурчĕ те,
çил сассипе тĕлĕрнĕ пек,
шăпланнă. Хупă чӳрече.
Сад çуталмасть хăй çутипе.

Хапха урлах пăркаланса
вĕçсе иртет çара çерçи.
— Çак хапхана вараласа
тикĕтлесен, мĕн пулĕ-ши?—

Тăп чарăнать те Кириле
çĕн хапхана пăхса тăрать:

— Çырсах хурас тикĕтпеле:
«Тяпук мучи,— тес,— хĕр парать!»

Хĕрĕнкĕскер, хапха умне
пырса çитменччĕ — тĕттĕмрен
такам алли Ҫириленe
ярса та тытрĕ хулĕнчен.

Хăрана каччă шарт! сикет,
вăл каялла утса каять.
Ҫĕлте пек çиçĕм ялт! çиçет,
тӳпе чаршавĕ уçăлать.

— Эс хуралта-и-ха вара?—
ыйтать умрах Юман сасси.
— А сан мĕн ĕç пур ман çумра?..
— Пĕр-ик сăмах пур каласси.

Шăртланчĕ ӳсĕр Кириле:
— Ҫалаç,— тет,— ав, савни пур сан...
Хуллен-хуллен ак сирĕлет
ун мухмăр-сухмăрĕ пуçран.

Юманăн вăйлă кĕлетки
хăратрĕ-шим ăна пăртак?
Асне, тен, килнĕ ĕлĕкхи...
Хăйсем ача чух тапăрта,
ял вĕçĕнчи çирĕклĕхре,
вĕсем кĕрешнĕччĕ пĕрре...

Лăшт кайрĕç каччăн аллисем:
— Ҫаçар... Эп йăнăшрăм, паллах..,

Ман менельник паян. Ҫичем
пӗччен килте ларма. Ҫапла..

Атя пӗрле ларар ирччен.
Эп пусрӑм ҫирӗм пиллӗке.
Эрехӗ пур ӗҫес тесен,
тен, пырӑн. Килӗш, ан тирке.

Юман чӗнменнине кура
уттарчӗ вӑл хӑй ҫулӗпе.
Шӑпланнӑ тӗттӗм урамра
ташларӗ ҫумӑр ҫӗрӗпе.

## ТЯПУК МУЧИ ТУЯЛАСА ТӐВАНКАСРАН ТУХСА УТТАРЧӖ

Ҫырма енчи пахча вӗҫне
Тяпук мучи ҫитсе тӑрсассӑн,
шак хытрӗ, сулчӗ аллине,
пӗр-ик хутчен сывларӗ ассӑн:

— Ҫаллех кулаҫҫӗ Тяпукран!
Ӗнер кӑна пахчам чиперччӗ.
Паян, ав, шӑтнӑ пӑрӑхран
нефть тухрӗ те йӑлтах пӗтерчӗ.

Пӗтерчӗ нефть ҫӗрулмине,
пахча вӗҫне те нефть хуратрӗ.
Мӗн ӗмӗрте курманнине
Назар ачи мана кӑтартрӗ.

Илтмест çав вышка Тяпука.
Мучи пушшех те хурланать.
Çул çуммĕн ӳснĕ курăка
пăхсан та тикĕт курăнать.

Саркаланса, карталанса
ун хурĕсем килеççĕ йышлăн—
те тикĕтлĕ шыва чăмса
вараланса пĕтсех-ха ишнĕ,

те юрнех нефть хуранне
кĕрет айван хур-кăвакал!
Каплах пулсан, хур тукмакне
тутанаймастпăр пуль кăçал.

Тӳсейĕп-ши çак мăшкăла?
Ăçтан капла тăвайăн пурнăç?
Çак пахчари нефте пула
хурт-хăмăрсем тата мĕн курчĕç?..

Ав, кӳршĕри ялтах аван
пурнаççĕ манăн ик тăван.
Çак таранччен унта пулман
Тяпук пек сăтăр куракан.

Куçса каяс çав колхоза,
вĕсем шыраççĕ, тет, утарçă...
...Тяпук мучи туяласа
Тăванкасран тухса уттарчĕ.

Çӳл ту çине ларса канас
тесе хыçа пăхсан, курать:

çуралнă ялĕ — Тăванкас
утрав пекех хыçа юлать.

Сăнать Тяпук йĕри-тавра
шывланнă ватă куçĕпе.
Пит йывăр-çке ватăлăхра
сывпуллашма тăван çĕрпе.

Вăл астăвать ачаранпах:
çак чăтлăх сĕм вăрман çинчен
çӳретчĕ тĕрлĕрен юмах
Тăванкасра мĕн ĕлĕкрен.

Çын çӳремен вар ĕнтĕ халь
тăрать таçтан янăраса—
унта хываççĕ çул-асфальт
Райцентртан Тăванкаса.

Мĕнле çеç пулĕ ку çĕршыв
килес çулсен ытамĕнче;
Тяпук мучи курайĕ-ши
ăна хăй ват ĕмĕрĕнче?

Шутларĕ те пĕччен мучи
мĕнпуррине аса илсе,
хуллен-хуллен ун куç шăрçи
тĕтреленет куççулленсе.

Қам курнă-ши ку таранччен
Тяпук мучи макăрнине?
Вăл юратман час йĕрекен
шывланчăк, нӳрĕ чунсене.

Çапах та чĕрĕ çын чĕри
чул пек хытса лармасть иккен.
Тен, хурланма та пĕлтĕр-и
хавасланмашкăн пĕлекен!

Ярăнтарса ту хĕррипе
«Москвич» килет—хăй çил-тăман.
Пит йывăр шухăш пуснипе
мучи ăна асăрхаман.

Машинăран тухать Назар,
тусĕ патне утса пырать,
Тяпук унпа пуплесшĕн мар—
темле кумкка пӳлет пыра.

— Эп каçармастăп,— тет Тяпук,—
аркатрăр манăн йăвана.
Хăв çулупах кай, тикĕт пух,
эп те утăм кана-кана.

Самант чĕнмерĕç иккĕш те.
Лере машина кăшкăртать.
Хай Назара кĕте-кĕте
шофер ĕшеннĕ — васкатать.

Турткалана-турткаланах
машинăна Тяпук та ларчĕ.
— Эп çулшăн тӳлĕп,— тет, чăнах
енчĕкĕнчен укçа кăларчĕ.

— Çитет, Тяпук, ан сӳткелен,
укçусене пытар та чик!—

Ту айӗнчи ял курниччен
тек калаҫмарӗҫ ик старик.

Пӗр ярӑнса анаталла
машина кайрӗ йӑр та яр.
Тяпук ҫул тытнӑ ял урлах
хӑй хулиневаскать Назар.

Ял вӗҫӗнче анать Тяпук.
— Тавах,— тет,— ҫитрӗмӗр чипер.
Машина хӑвӑрт иртнӗ чух
ним сассӑрах юлать кӗпер.

Тем пулнӑ пек шӑпах урам.
Тӑванӗсем килте пулмарӗҫ.
Те юриех ват Тяпукран
тарса пытанчӗҫ, курӑнмарӗҫ...

* *
*

Клубра пуху пырать иккен.
Ял халӑхӗ пурте клубра.
Ҫитес кунхи ӗҫсем ҫинчен
хӗрсех пуплеҫҫӗ пухура.

Ҫын куҫ умне курӑниччен
Тяпук якатрӗ сухалне.
Хура сӑран атти ҫинчен
Шӑлса тасатрӗ тусанне.

Кунта кӗме хал ҫитнӗ ун...
Кӗрсе пӑхас, итлес пӑртак.

Малта ларать президиум.
Итлеççĕ пурте шăпăртах.

Сăмах калать пĕр çамрăкскер
клуб пӳлĕмне янăратса:
— Пĕр колхоза пĕрлештерер
хамăр ялпа Тăванкаса!

— Пĕлмен ял мар. Хăçантанпа
пĕрле пурнатпăр, кӳршĕлле!..
Вырăнтанах Мархва аппа
сăмах калать:— Пĕрлешмелле!

Тепри тухать сĕтел умне,
çынсем çине пăхать, унтан
(хăй хут çине мĕн каласне
çырсах вăл хунă манасран):

— Ак эп колхозăн тимĕрçи.
Ăсталăхăм çитмест пулас.
Хальччен ютран тытмарĕç-и
тимĕрçсене ик хут хакла?

Тăванкасри тимĕрçсене
епле хăйса тиркемелле?
Вĕсем пулсан, ремонт ĕçне
эпир тахçан пĕтермелле.

Выльăхсене çитмест вите,
чăх-чĕп çинчен сăмах хускатăр!
Вăрманĕ пур, проекчĕ те...
Платниксене вара кам патăр?

— Апли апла та-ха, Васук,—
тет пĕр хĕрарăм хыçалтан,—
Те килĕшеççĕ-ха, те çук
Тăванкассем, пĕлес малтан.

Вĕсен çаранĕсем аван,
пăлан пек фермă ĕнисем...
Хĕл кунĕнче те сĕт-çуран
пĕр татăлса курман вĕсем.

Аван та пулĕччĕ, эхер,
Тăванкаспа пĕр колхозра.
Ман шухăш çавă: пĕрлешер!
Колхозăн вăйĕ — ушкăнра.

Сĕтел умне тухать пахчаçă,
сухалĕ унăн кĕреçе.
Районĕпех ăна мухтаççĕ
вăл юратса тăвать ĕçе.

Ун пахчинче ӳсет хăярĕ,
Купăстисем те пăт таран.
Пĕкĕлмери колхоз пасарĕ
ун çимĕçне сахал курман.

Мучи тухса тăрать мала:
— Сăмахăмсем,— тет,— ман кĕске.
Колхоз пĕчĕккине пула
ытла аран утатпăр-çке.

Пĕр пысăклатнă колхозра
эп Украинăра хам пултăм.

Вĕсем кĕске çеç вăхăтра
юсаннă, тунă пысăк утăм.

Ăста вĕсем çĕр ĕçĕнче.
Çулсеренех акаççĕ курăк.
Кăпăшланать çĕр çеп-çемçе,
ун пек тăпра курман эп урăх.

Сад пахчинче улми-çырли
вĕсен мĕн чухлĕ-тĕр, кам пĕлĕ.
Выльăхсем те мĕн тĕрли,
миçе йышши-ха! кур та тĕлĕн!

Машинăпах апат туртаççĕ,
машинăпах шăвармалла,
машинăпах ĕне сăваççĕ—
пирте те пулмалла çапла.

Мĕнле пуяççĕ-ха вĕсем?
Ăçтан ун чухлĕ килтĕр пурлăх?
Нумай пулмасть-ха çыннисем
пурăнкаланă çуклă-пурлă...

Вĕсен колхозĕсем шултра,
кашнин çĕр пысăк, шыв, çаран...
Пĕрлешнинче усси пурах,
çук, ӳпкелешмĕр нихăçан.

Тахăш йăслать ав хыçалта:
— Кам тумалла ака-сӳре?..
Ялта хĕрарăм шăкăртах,
арçыннисем — начальникре...

Çав пурлӑ-çуклӑ çынпала
ĕçе епле тытӑнмалла?
Те выльӑхне ĕрчетмелле,
те анине çемçетмелле?

— Ик лашана шӑп пĕр урхалӑх—
тата тепри сиксе тӑрать.—
Комбайнсене кĕрсе тухмалӑх,
уй-хир çук пĕчĕк колхозра!

Хӑй малаллах калать пахчаçӑ:
— Çимĕç пахчи, колхоз утарĕ—
Кашни ялтах çавна тӑвасчĕ.—
Пысӑк колхоз пулсан, пултарĕ!..

Клубра пур халӑх шав тӑвать
алӑсене çупа-çупа.
Сасартӑк темĕнле хӑват
çунатлантарчĕ Тяпука.

Кĕрсе тӑрать Тяпук клуба:
— Мана та парӑр-ха сӑмах!—
Пӑхать пур халӑх, шур упа
вĕсен умне курӑннӑнах.

Ак пуху пуçлӑхĕ Хветте
(вӑл хӑй ĕçне пĕлсе тӑвать)
йĕс шӑнкӑравне янтратрĕ те
пусарчĕ пĕтĕм шӑв-шава.

Уполномоченнӑй пекех
Тяпук мала тухса тӑрать.

Сăран атти, инкек тĕлнех,
çатăртатать ик урара.

Умне вăл шурă хут хумарĕ,
сыпмарĕ шыв та пĕр çăвар,
анчах сăмах кала пуçларĕ—
пĕр никамран та катăк мар.

— Тăванăмсем, савăнăça
мĕнле калам-ши, тупата!
Ват чĕреме пĕрех уçса
кăтартăттăмччĕ умăрта...

Эп сирĕнпе-мĕн, тахçанах
ĕçлесшĕн кăмăл тунăччĕ.
Айван мар-и! Нефть тухсанах
колхоз пĕтессĕн туйăнчĕ.

Колхозĕ пултăр аслăрах,
пĕрлештерер-ха ик яла.
Хăш вĕллере йыш пысăкрах,
унтан пыл илĕн пăтпала!

## „ÇŶЛ ТУ ÇИНЧЕ, ÇАРАН ÇИНЧЕ, ÇАРРАН ÇŶРЕССЕМ КИЛЕТ...“

Тăванкаса райцентртан
Телефонпа райком чĕнет.
— Алло!
— Алло?
Итлет Юман,—
хăй трубкине вĕрсе илет.

— Çапла-ха,
секретарь юлташ,
ĕç вĕçленсе килет, аван.
Ик вышкăра пĕтет монтаж,
вĕсем те тытăнĕç ыран.

Маçтăрсене мĕн калама,—
Ишимбайри паттăрсемех!
Турбинăпа пăралама
пуçласшăн иккĕш те тӳрех.

Хăвăртланать ĕç. Уявччен
виç скважина паратпăрах.
Хваттер?.. Пире хваттер енчен
колхоз пит пулăшать. Тавах!..

Çакать те трубкăна Юман,
тухать бригада будкинчен.
Хăпарчĕ тĕтĕм çырмаран...
Ир... Сывлăм шывĕ — çут мерчен.

Правленире — бригадирсем,
кунтах ак килнĕ агитатор...
— Вырма тухатпăр, юлташсем,
хальхи пĕр кун—пĕр çул тăранттăр!

Комбайн патне — вунвиç лаша,—
ăсатрăн-и, Тарас пичче?
— Ирех вĕçтерчĕç.
— Ыраша
ан тăккалаччăр çул çинче.

Йĕтем çине шыв пичĕки
леçме ан ман эс те, Хĕветĕр.
Яшка хуранĕ — пысăкки
кăнтăрлана хирте вĕретĕр.

Правленире ĕç çук паян,
эс, Кириле, хирте тарла.
Çĕн сăмахсем ил пуштăран,
çынсем вулаччăр кăнтăрла.

*   *
*

Хир хумĕпе çĕкленнĕ пек
шăваççĕ пĕлĕтсем катраммăн.
Çак ирĕкре таса çилпе
епле вара çӳçе турамăн?..

Те сывлăшех çапла юрлать,
те кайăксем, те хурт-кăпшанкă...
Чĕриклетет, вĕçет, шавлать—
уй-хир уявĕ мар-ши çакă!?

Туй шавĕпе янранă пек
илтĕнекен хаваслăхра
мĕнпур уй-хир анлăшĕпех
колхоз ырашĕ сап-сарах.

Çула пытарнă ылттăн хум,
варсем те хум айнех пытаннă.
Хирте виç хурăн — чаплă тум
тумланнă арăмсем пек танлă...

Машинăпа ыраш выраççĕ
Кирилепе пĕрле Улька.
Хĕрарăмсем кĕлте сыхаççĕ,
ырлаççĕ икĕ çамрăка:

Улька лаша тытса пырать,
леш пăрахать-мĕн вырăнне.
Тем чул калас сăмах юлать
хирте хĕрӳ ĕç пур чухне.

— Ывăнтармасть-и, Кириле?
— Çук, вăл нимех те мар, Улька...
Пĕрле каятпăр-и киле?..
— Чим, курăпăр. Каç пултăр-ха.

— Атя, Улька, пĕрле юрлар...
час çитĕ кĕтнĕ кĕркунне...
— Вара мĕскер?..
— Нимех те мар...
Саватăп савăк куççене...

Кĕрлет машина. Хыçала
çĕклем-çĕклем ыраш юлать.
Хăй те сисмест, юрла-юрла
Улька хăй шухăшне калать:

«Çӳл ту çинче, çаран çинче,
Çарран çӳрессĕм килет.
Саватăн-и, савмастăн-и—
Çавна пĕлессĕм килет...»

Йĕтем çинче çапаççĕ авăн.
Хĕрсен юрри вĕçет çилпе:

«Ан аван, шĕшкĕ, ай, ан аван
кăштах лĕп çилĕ вĕрнипе!..»

Нефтяниксем бригадипех
паян ĕçлеççĕ колхозра.
Ҫашни кĕлте халь ылттăн пек,
пуçтармалла ăна часрах.

Кĕлте парса тăрать Юман.
Ҫĕн молотилка кĕр-кĕрлет.
Тяпук мучи, ав, утартан
караслă пыл йăтса килет.

Ун кăмăлĕ темле халь уçă,
утать хăй çăмăл, такăнмасть.
Ҫуçлăхсăрах курать-мĕн куçĕ—
ялах вăл юлчĕ пурăнма!

Хĕрсем те тырă сăвăраççĕ,
унтах ун хĕрĕ Кĕтерне.
Ҫаса-каса çĕн пыл карасĕ
парас килет çав кашнине.

Кĕтернене вăл кăчăк туртрĕ:
— Сăйла-ха,— терĕ, —лешсене.
Ҫак сехетрен ман çиллĕм-мурĕ
çухалтăрах çăва тĕпне.

Юман ĕçленĕ хушăрах
кулса пуç тайрĕ Тяпука.
Асăнас мар ĕнтĕ вăрах
хушăмăрти пура-çука.

Кӗтернепе Юман ларса
тутанчӗҫ пыл пӗр чашӑкран.
Пыл чашӑкӗ ӑшне сӑпса
вӗҫсе кӗрсе ӳкет таҫтан.

— Кирилене санӑн пӗрре
илӗртсерех сӑмах каласчӗ!—
Йӑл кулчӗ хӗр. Тата тепре,
тата тепре ҫеҫ култарасчӗ!

— Ҫукпа текех ан кӳлешсем,—
тесе хӗр усрӗ те пуҫне,
кайран, куҫпа куҫ пӗрлешсен,
савни ӑнланчӗ савнине.

## ТЕЛЕЙ СИРЕ ТӐВАНКАССЕМ ЭСИР ХАЛЬ ПӖР ПЫСӐК ЙЫШРА

Кӗр ҫитрӗ — ылттӑн кӗркунне.
Вӑрман ҫинче — кӑвар хӗлхем...
Карталанса ҫуркуннене
илме каяҫҫӗ тӑрнасем.

Вӗт ҫумӑр хыҫҫӑн кӑмпара
ҫӳреҫҫӗ пирӗн инкесем.
Кӗтӳ анмасть халь тапӑра...
Саралчӗҫ ешӗл сукмаксем...

Тырра пуҫтарнӑ уй-хиртен,
тӑваҫҫӗ тракторсем ҫӗртме.
Тӑванкасри ҫынҫем ӗҫчен,
пуҫларӗҫ хӗллене кӗтме.

Қашнин кил-çурчĕ ăшă, çутă...
Қилес кунсемшĕн ан хăра,
Тату, илемлĕ, ырă, тутă
халь пурнăç пĕр пысăк йышра.

Пĕр эрнерен çитет уяв!
Вуник киле туй кĕмелле.
Тăванкасра çӳрет йыхрав—
авланмалла, тет, Кириле.

* *
*

Паян ялта мĕн иртенпех
каç пуласса кĕтме пуçларĕç.
Тĕттĕмленсен, çемйисемпех
Тяпукăн пахчине васкарĕç.

Тяпук мучи мăнкăмăллăн
çӳрет, тин тупнăн канăça:
— Нефть тупасси пит çăмăл-им?
Вăл тикĕт мар вĕт... ылттăн çав!

Пăхса илет куç хӳрипе
хăй юлташне — ват Назара.
Ял халăхĕ хурт-хăмăр пек
пуçтарăннă Назар тавра.

Назар курмасть-ха Тяпука,
щĕлепкине хывса вăл тытнă.
Йĕри-тавра păха-пăха
тем калаçать хăюллăн, хыттăн.

Итлер-ха унӑн сӑмахне,
— Паян епле ҫӗмӗрттерет:
— Паян кунта нефть тухнине
мӗнпур ҫӗршывӑмӑр пӗлет.

Телей сире, Тӑванкассем!
Ҫӑкӑр ан татӑлтӑр умран,
тулли пулччӑр пыл каткисем,
«хура ылттӑн» тухтӑр пуян!

...Қаҫ пулчӗ, лӑпкӑ-лӑпкӑ каҫ.
Ҫӗр айӗнчен нефтьпе пӗрле
тухать пӑрӑхсем тӑрӑх газ,
ҫавна паян каҫ чӗртмелле.

Сехет ҫитсессӗн саккӑра,
шӑпланчӗ шӳт, сӑмах е кулӑ.
Пӑрӑх тӑрне ҫак вӑхӑтра
ҫӗкленчӗ пысӑк-пысӑк ҫулӑм.
Ҫурхи шыв татнӑн пӗвене
вара никам хушмасӑрах
ҫынсем хӑйсем тӗлӗннипе
пин-пин саспа ҫухӑрашсах
шавла пуҫларӗҫ... Ал ҫупни,
пӗр-пӗринпе ыталашни,
ҫӗкленчӗ тинӗс евӗр шав,
туй темелле, ҫурхи уяв!

Ҫап ҫутӑ пулчӗ таврара.
Ялав пек ҫуламланчӗ вучӗ.
Ун ҫутинче, ҫак уявра
юлташпала юлташ тӗл пулчӗҫ.

Назар йăл кулчĕ те, Тяпук
кăштах именчĕ, алă пачĕ:
— Кур: хулари пекех ку чух—
ман пахчара та нефть тупаççĕ!

...Акатуйри çĕн тутăр пек,
çап-çутă факел варкăшать.
Қаçма çинче сар хĕрĕпе
сар каччă ăшшăн калаçать.

Çӳçеллĕ тутăр пусĕнчен
хĕр салтрĕ, пачĕ каччине,
ӳссе çитсе хĕр пуличчен
уявсенче çеç çыхнине.

— Ман чĕрери юратăва
эс йышăнсассăн, юратсан,
пĕрне-пĕри тупа тăвар,—
Кĕтернене калать Юман.

— Нихçан ан сӳнтĕр юрату,
çак факел пек çутаттăр, çунтăр!
Чăн пурнăç çулĕ — аслă ту—
Пĕрле утмашкăн çăмăл пултăр!

...Кĕрлет нефть факелĕ. Унра—
пăрахут сасси — хум каснă сас.
Умри хума çура-çура
мала ишет пек Тăванкас.

## САЛТАК КАЛАВĔ

...Васкатчĕ пуйăс Мускавран
Ĕпхĕвелле, тухăçалла.
Вĕçе-вĕçĕн уй-хир, вăрман
Юхса юлатчĕç хыçала.

Пĕр вагонра, пĕр купере
манпа пĕрле килет салтак.
Час-час туртать. Минутсерен
Махорка енчĕкне салтать.

Ун чĕрĕ куçĕ сеп-сенкер,
пăхать вăл çамрăк каччă пек.
Çӳçне кăна темле хĕн-терт
шуратнă, лекнĕ хаччипе.

Çамки çинчи пусмаллă карт
Ир палăрман-тăр ахальтен.
Çынни йăваш, тем пек юмарт—
хĕн курнипех çапла пуль, тен.

Сăй кăларать кутамкинчен:
— Ку купчĕнеç,— тет,— ку салам,

сăйланăрах тиркемесен.
Ҫăмăл турамĕ — пĕр турам...

Салтакăн сăйĕ сухари
шыва чиксессĕн исленет,
тăван килти кăмакари
темле сăйран та ирттерет.

Салтак нумай сăмахламасть,
хăй пăрăнать калаçуран.
Хулпуççисем ун пĕр хăлаç—
чӳречене хуплать тăрсан.

Вăл пулнă, тен, кĕрешекен
çак вăрçăччен — ăçтан пĕлес?
Ҫуратăн халĕ, ĕненен:
хăрах ури тĕпрен — протез.

Пĕр станцăна çитес чухне
çĕрлеччĕ. Ҫантăк хуп-хура.
Пассажирсен ыр канлĕхне
лăпкатчĕ ыйхă вагонра.

Ҫывăратчĕç пурте— кам мĕнле:
ларни — ларса, выртни—выртса..
çын çывăрни айккинелле
пăрса ямасть-çке пуйăса!

Пуç айĕнчи хутаççине
ыталаса çыврать пĕри.
Анăрашать тем каçхине
тăнне çухатнă ӳсĕрри.

Пуçа çĕклерĕм те, салтак
ларать-ха кантăк умĕнче.
Ķаллех вăл енчĕкне салтать,
кăвар сӳнмен чĕлĕмĕнче.

— Ма çывăрмастăн. Çывăр, кан,—
канма сĕнетĕп эп ăна.
— Эп иртрĕм,—тет,—хам станцăран,
хыçа вăл юлчĕ халь кăна.

Салху вăл халĕ, пит салху,
сасси те лăпкă, урăхла.
— Унта-им сан тăван салу?
— Унта... Юлмарăм эп яла...

Чĕре çунать, курас килет
тăван, юратнă кĕтесе.
Пырса халь кĕрĕттĕм киле
«Аван-и! Таврăнтăм», тесе.

Эп утăттăмччĕ çурранах
пин çухрăма киле тесен,
анчах тин сӳнне сӳрана
ма çунтарас-ха çĕнĕрен?

Салтак чĕнмерĕ пĕр самант,
вăл ларчĕ кайнă пек чире.
— Эп пĕчĕк айăп та туман,
хăйса кам уйăрчĕ пире?

Ма уйрăлтăм эп çемьерен
ун телейне курмасăрах?

Мана халь çук-тăр кĕтекен—
Эп юлтăм мăшăрсăр — хăрах.

Салтак, чĕри çемçелнипе,
сисмерĕ хăй те мĕншĕнне—
кив кĕнеке вуланă пек,
астурĕ иртнĕ кун-çулне.

Чĕре çинчи хуйха-суйха
çынпа пăртакçă уйăрсан,
çăмăлланать вăхăтлăха
тӳрленейми асап-суран.

Ун вăрăм калавне илтсен,
хальччен пирус туртман этем,
чăнах, салтак енчĕкĕнчен
туртасшăн пултăм эпĕ те.

Итлерĕм эп ăна, йăлтах
манса кайса хам ăçтине.
Самант куçне хупса, салтак
çапла пуçларĕ калавне.

2

Телей пур чух-çке чухламастпăр
ун виçине, хакне-мĕнне.
Аван пурнаттăмăр чамасăр
кĕтсе татах та ыррине.

Çапла-çке вăл этем йăлийĕ—
мĕн виличчен таçтаваскать.

Анаталли те, тӑвалли те
ирте-ирте хыҫа юлать.

Анчах та уйрӑм паллӑ вырӑн
Пулать кашнин кун-ҫулӗнче,
хутран-ситрен сӑваплӑн, ыррӑн
аса илме куҫҫулленсе.

Авланнӑ чух вунтӑххӑртаччӗ.
Мана пӳрни, калам-и, кам?
Сире ма кирлӗ унӑн ячӗ?
Ятне манасшӑн ӗнтӗ хам...

Пӗлместӗп, вӑл мӗнпе астарнӑ,
Мӗнпе вӑл килӗшнӗ мана?
Хитреччӗ ҫав. Ӗҫре хастарлӑ.
Ман ӗмӗт пулнӑ вӑл кӑна.

Қарти-карти хӗрсем тухатчӗҫ—
пӗвеленетчӗ ҫур урам.
Вӑл тухмасан (те вӑл тухатнӑ!)
умра ман ҫукчӗ пек никам.

Куҫ умӗнче пӗр вӑл кӑначчӗ
ӑҫта кайсан та, мӗн тусан...
Эп хам та пулнӑ харсӑр каччӑ,
хӗрсем пӑхман-и ман куҫран?..

Ҫук, ҫук, ку питӗ тӑнлӑскерччӗ,
юратӑвне сапаламан.
Ман юрату ӑна ҫӗнтерчӗ,
аттен кил-ҫурчӗ, шур чӑлан...

Савмасăрах качча кам тухтăр?
(Савмасăр тухнисем сайра).
Туй умĕн панă пурçăн тутăр—
хĕр тутăрĕ халь çук манра...

Юмахри пек шăвать-мĕн пурнăç
малтанхи çул та хыççăнах,
Кил-çурчĕ пултăр çуклă-пурлă,
çапах вăл ырă çĕн-çынна.

Эпир пурнаттăмăр пит лайăх
ĕçсе-çисе пĕр чашăкран.
Пурна-киле ак пĕчĕк кайăк
çуралчĕ шăп çулталăкран.

Ман урттăш-йывăç пурччĕ селĕм
юри çĕн сиктĕрме тума.
Сăпка çакса сиктереймерĕм
пĕртен-пĕрех ывăлăма.

Ятне хуманччĕ-ха. Кĕтеттĕм
эп аякри тăванăма.
Кĕрекере ят хурăп, теттĕм,
кирлех-çке кумĕпе кумма!

Анчах... пĕлетĕн ху, тăванăм,
мĕн пулчĕ хĕрĕх пĕрмĕш çул...
Паянхи пек эп астăватăп,
каларăм арăма: сыв пул.

Çăмăллансан — тăманччĕ халĕ
тĕрекленсе ура çине.

Пурах-тăр ывăл ăрăскалĕ,
çухатмĕ ывлăм ашшĕне.
Ăшра хыпса çунатчĕ çулăм,
выртса чуптурăм ывăла.
Вăл мĕн ăнлантăр, ман çур чунăм,
Ăнлăнасси çун — малалла.

Хапха умне килсе кăкартăм
çунатлă турă ăйăра.
Ыр кăвакарчăнăмçăм — арăм
йĕрсе йĕпетрĕ кăкăра.

Куç умĕнче ял тĕтреленчĕ.
Эп тухрăм та урамалла,
çавраçилпе тусан çĕкленчĕ
арпаштарса каяс çула.

Урамĕсем-çке кукăр-макăр,
кукрисерен улма шăрши...
Шăла çыртса куççуль тăкмасăр
ма уйрăлмашкăн йывăр-ши?..

Мĕн каласси?.. Лавсем ăсанчĕç...
ыр çын кайсан, ят юлтăрах!
Каллех килме пулсан та—шанчăк,
кĕтекене кĕтме вăрах.

Çапла ăсантăмăр, тăванăм.
Эс ху та курнă уйрăлса...
Вара салтак ман темĕн маннăн
пăртакçă ларчĕ шăпланса.

Ункăланса саланчĕ тĕтĕм.
Салтак, ма чарăнтăн? Кала.
Чӳречере çаплах пăч тĕттĕм,
васкать-ха пуйăс малалла.

3

Салтак пулман арçын сахалччĕ
хĕрсем тумланчĕç арçынла.
Нумайăшĕ вутра çухалчĕç.
Çунатчĕ ял, çунать хула...

Анăçалла эпир утатпăр,
тухăçалла та çын утать.
— Ăçтан эсир, ăçта каятăр?—
эпир ыйтмастпăр, çил ыйтать.

Утать ватти-вĕтти, хĕрарăм...
Çул тăршшĕпе тусан юпи.
Пин çын куçать... Мĕнле-ха чарăн?
Çапла иккен этем шăпи.

Çĕр чĕтренет малта сивлеккĕн,
выртать мĕн çулăмăр унта.
Мĕн пуласса малтан пĕлме хĕн,
анчах кĕретпĕрех вутта.

Тăван çĕршывшăн, çĕр-аннешĕн!—
тесе утать кашни салтак.
Йĕри-тавра çаран ем-ешĕл,
манăн çĕршывăм — хыçалта...

Умра тăшман. Утмастпăр урăх.
Халь çапăçар, вăя виçер.
Ма тутăхнă-ши ешĕл курăк?
Юнпа хĕрелнĕ вăл ĕнер.

Çĕре чавса выртатпăр пурте,
пĕр утăм та чакма хушман.
Кĕтмен çĕртен пире час курчĕ
çӳлтен вĕçсе килсе тăшман.

Ак мăйракаллă нăрăсем пек
танксем тухаççĕ айлăма.
Тăшман валли ман пур пĕремĕк—
ик-виç граната — сăйлама.

Танк хыçĕнче фрицсем чупаççĕ,
чупаççĕ пирĕн çĕр çинче.
Çӳлтен вĕри тăхлан сапаççĕ
«мессершмитсем» пуç тăрринче.

Хĕрӳ хĕвел, пушар пек, çутă.
Снаряд кăшлать умри сăрта.
Эх, çĕр-аннеçĕм! Эх, пехота,
винтовкуна хыт чăмăрта.

Тĕллетĕп те перетĕп. Ӳкрĕ.
Шик тарчĕ манăн таçталла.
Пеме пĕлетĕп-мĕн тӳп-тӳрĕ.
Ан ывăн. Ĕлкĕр. Авăрла.

Тарланине сисместĕп. Шăрăх.
Йăмăхтарать куçа тăвар.

Танксем килеç. Траншея тăрăх
приказ: ан чак эс, ху чаkар!

Танк иртсе кайрĕ. Вăранатăп
самант хытса тăнă çĕртен.
Танк хыçнелле ик-виç граната
вăркăнтарап ура çинчен.

Ахлатрĕ танк. Çĕкленчĕ çулăм.
Мана пуçран кĕç çапрĕ тем.
Kуç-пуç хуралчĕ. Хумлăн-хумлăн
саланчĕç хĕрлĕ ункăсем...

Мĕн чухлĕ выртнă — кам шутланă?
Пăхатăп та тăна кĕрсен:
Юнпа хĕрелнĕ, хытнă çанă...
Kуçсем кураççĕ — эп вилмен.

Хусканаймасть-çке сылтăм аллăм,
вăл ыратать, вăл хамăн мар.
Ёçес килет, юлман вăй-халăм.
Туятăп эп: ĕçсем начар.

Таçта хыçра перкелешеççĕ
халь тупăсем сайра хутра.
Çӳлте шур пĕлĕтсем ишеççĕ
пулман пек вăрçă таврара.

Снаряд хуранĕнче выртатăп.
Пĕччен-шим эп çара хирте.
Çумра ман çăкăр пур пĕр татăк.
Винтовка, ав, выртать çĕрте.

Махорка пур кӑштах туртмалӑх,
шыв юлнӑ флягӑра пӑртак.
Хускансанах сурать-ҫке алӑ.
Тӳсес. Тӳсес ҫыхмасӑр та...

Вӑрманалла шуса тарасчӗ.
Пирӗннисем манран инҫе.
Унта-кунта танксем тӑраҫҫӗ—
пӑрланнӑ пек ҫу кунӗнче.

Пӗр грузовик выртать хӑяккӑн,
салтакӗ ӳкнӗ месерле.
Умри вӑрман — ҫур ҫухрӑм яхӑн,
унта шуса ман ҫитмелле.

Пуҫ ҫаврӑнать. Шумашкӑн йывӑр.
Кама-ха ҫӑмӑл вӑрҫӑра?
Тӳс, чунӑм, вилӗме ан йыхӑр,
пурах-тӑр ҫӑлӑнӑҫ — шыра.

Ытла хуллен шӑватӑп, ахӑр,
те вӑрманех манран тарать?
Выртатӑп вилнӗн, сывламасӑр,
Пилоткӑпа шӑлап тара.

Ҫулпа вӗҫсех иртет машина,
ман ҫинелле вӗҫет тусан.
Иртсе каять. Курмарӗҫ-ши-мӗн?
Чӑнах, телей пурах-шим ман?..

Каллех шӑватӑп, хӑтарассӑн
вӑрман мана пур нушаран.

Выртса вилмешкĕн шутламастăн—
чĕре тапсассăн, куç курсан.

Ак умăмрах çап-çамрăк хурăн—
те хирĕç тухрĕ салтака.
Ярапине тытса чуптурăм,
туймарăм, путрăм ыйăха...

Мана выртма çемçеччĕ курăк,
ыратнине-мĕнне туйман.
Каллех ача пек, хир-хир урлă
чупатăп пек çарауран.

Куç умĕнче аннен мĕлкийĕ
вилсен пытарнă кĕпипе.
Вăл тем каласшăн, темĕн кирлĕ,
темме ун куçĕсем йĕпе...

Пĕр тĕлĕкре мĕн çеç курмарăм:
ят хутăм пек хам ывăла.
Савăннипе ман савнă арăм
ташлать пек тем юрла-юрла.

Урай каштийĕ шăтăртатрĕ,
ман арăм мар, такам ташлать...
Мана хайхи тапса вăратрĕ:
Умра ик-виçĕ çын тăрать.

Ăна курсан, куç-пуç хуралчĕ,
мана тĕллет пĕр автомат.
Эп халиччен пулман хăравçă,
макăрнине те астумасп.

Анчах, тăванăм, мĕн тăвас-ха?
Хăть хыпала, ан хыпала:
алла лекет пĕртен-пĕр каска,
лекмест граната ман алла...

Тинех çаклантăм-мĕн. Тăратăп.
Аран утатăп — утмалла.
Перес пулсан — вилсе юлатăп.
Пăхма хушман хыçалалла.

Умри сукмак хăçан вĕçленĕ?
Тӳпе хăмач пек анăçра.
Вырман ыраш — сукмак ик енĕ—
мĕн-ма çын çук-ши вырмара?..

Лупашкана пĕр ял пытаннă,
ял каранă шӳр тĕтĕмпе.
Пĕр-пĕрине курма вăтаннăн
сĕмленчĕç-шим çĕрпе тӳпе?

Қаçпа, çырма хĕрне çитсессĕн,
валак-çăл куранчĕ мана.
Хурал, куратăп, пĕччене-мĕн,
пĕччен пулсан та тăшманах.

Ăш каниччен ĕçме памарĕ,
çапах пусартăм кăшт чуна.
Йĕри-тавра хайхи сăнарĕ,
мана васкатрĕ мунчана.

Эп кĕтĕм те, тултан пит хăвăрт
çаклатрĕ нимĕç алăка.

Ура сасси çухалчĕ йăпăрт
мунча хыçне, тăкăрлăка.

Мĕн пулчĕ ку? Ма мунчара эп?
Мана хăварчĕç мĕн шутпа?
Эп пăхкалатăп... тен, тарайăп...
Урайĕнче сикет шапа.

Тĕртсессĕн алăк хусканмарĕ,
тĕнни те хĕсĕк-çке ытла.
Тарăхнипе ма пĕчĕк мар эп,
тесе ятлаçрăм ачалла.

Лапка çинчен ак тĕрелетĕп
эп маччине çурăмпала.
Вăй пĕтнипе тĕшĕрĕлетĕп,
ыратнипе çыртап шăла.

Тарма май çук—куратăп лайăх,
Хăть çуркала хăвна, хĕне...
Çын аллине çакланнă кайăк
çинчен шутларăм ун чухне.

Ирĕклĕхри çырма пĕр майлăн
шăнкăртатать тек пĕр тĕлте.
Ăна темле илтетĕп те,
аса килет ман савнă ялăм...

Ăш çиліпеле вĕçсе таçтан-тăр
килет-çке армути шăрши.
Пĕччен салтак ăçтан-ха мантăр
тăван килне, тăван çĕршыв?..

Ав, вăтанса, тухасшăн уйăх...
Вăл пирĕн ялăн уйăхех.
Çак уйăх витĕр ман ыр туйăм
кĕринччĕ ман тăван килех.

Вăл арăма хуллен вăраттăр,
ман ятсăр пĕчĕк ывăла.
Пепкеçĕм лăпкăн сывăрать-тăр
тĕлĕкĕнче кула-кула...

Ăçта вĕсем, мĕскер тăваççĕ?
Тен, хăй çути килте сÿнмен?
Тен, çĕрĕн-кунĕн куç хупмаççĕ,
çыру кĕтеççĕ ашшĕнчен?..

Ун чух куççуль тухмарĕ пулĕ.
Пытантăм тĕттĕм кĕтессе.
Алла илетĕп мунча чулĕ,
кĕтетĕп нимĕç килессе.

Кĕçех сас пачĕ алăк умĕ.
Ман алăк уçăлчĕ хуллен.
Çын шавламасть. Кĕтетĕп. Ку мĕн?
Хунар çутмасть. Хăй пĕр-пĕччен.

Хыпаласа шырать вăл темĕн.
Çук, нимĕç мар ку, урăххи.
Пĕрех сиксе тăрасчĕ шăппăн—
Ултавлă-çке-ха вăй çукки.

— Юлташ, юлташ, ăçта эс?— терĕ
такам сасси. Хĕрарăм-им?

Ӑнах-и, тӗлӗк-и?— пӗлмерӗм
савӑннипе тӳрех пӗр ним.

Ҫавна кӑна, тӑванӑм, калӑп:
сайра пулать вӑл ун пекки.
Юлнах пуль пӗрчӗ ӑрӑскалӑм,
пулмарӑм мӑшкӑл — ҫав пахи.

Хӑй килӗнче хайхи хӗрарӑм
мана усрарӗ ик эрне.
Ӑштах канам. Нумай каларӑм.
Час ҫитӗпӗр калав вӗҫне.

Салтак каллех тивертрӗ чӗлӗм.
Васкать-ха пуйӑс хашкаса.
Ӑупа пӗлӗтсене тӗл-тӗллӗн
шӑтарнӑ шуҫӑм шӑратса.

4.

Ҫук, нимӗҫ мар мана вӑратнӑ
аманнӑ хыҫҫӑн вӑрманта.
Партизансем иккен ӑсатнӑ
мана тӳп-тӳрӗ ҫакӑнта.

Эп тыткӑнра курассӑм пур-и
ҫак ӗмӗре те ҫак куна.
Вӗлерӗччӗҫ. Тӗрме хӗн-хурӗ
хуҫлатӗччӗ ал-урана.

Пӗр вилӗмрен эп юлтӑм сывӑ.
Ӑам пулнӑ нимӗҫле тумли?

Вăл кам пулсан та, маншăн çывăх,
чи çывăх тăванран хакли.

Вунулттăри яш партизанăм
мана хупсассăн мунчана,
вĕрентекенĕ ун — хĕрарăм
çуса çыхайрĕ сурана.

Пĕр хăрамасăр, шикленмесĕр
мана пытарчĕ хăй килне.
Эп манас çук ун мамăк евĕр
ачаш, çемçе аллисене.

Сарай тăрри. Ем-ешĕл утă.
Выртаттăмччĕ утăлăхра.
Ӳпкелешӳ те, тарăху та
тулса килетчĕ ăшăмра.

Эп ма кунта? Эп ма çухалтăм?
Пулман стройран тухма приказ.
Ура çине тăма пур халăм,
тăван полка епле тупас?

Юлташăмсем мана пĕлмесĕр
аманчĕ, вилчĕ, теççĕ-ши?
Хăравçă, сутăннă ан теччĕр,
хăравçăлăх — чи хăрушши.

Эрне выртатăп-и, ытла-и—
кайма пуçтарăнтăм вара.
Вăл хăнара выртмашкăн лайăх,
салтакăн вырăнĕ стройра.

Анчах учительница манӑн
(Надежда теттӗм эп ӑна)
шкул ачине пӗлсе йӑпатнӑн
йӑпатрӗ тарӑхнӑ чуна.

«Фронт урлӑ халь каҫаймӑн,—терӗ —
пӗртен-пӗр ҫул — сӗм вӑрмана.
Партизансем патне ҫитерӗп
май пулсанах, тен, ыранах...»

Вӑл пистолет кӑларса пачӗ,
ӑҫтан-ха тупнӑ — ан шарла.
Час-час таҫта вӑл ҫухалатчӗ,
сайра килетчӗ кӑнтӑрла.

Пӗр вӑтӑртан иртменччӗ пулӗ,
хӗр темелле тӗсне пӑхсан.
Хӑй яштака, чипер ӳт-пӳллӗ—
хӑраттӑм нимӗҫ курасран.

Урамалла пӑхаттӑм вӑрттӑн,
курнатчӗ хир, ҫырма, пахча...
Ӑҫта та йӗрӗ пур-ҫке вӑрҫӑн,
мӗнпур енче куран вӑрҫа.

Ял вилнӗ пек. Сайра курнаҫҫӗ
ҫынсем шӑпланнӑ урамра
Кантӑк умне вyртсан ҫу каҫӗ
тӗнкӗлтетмест ялта тӑмра...

Ҫӳлте е моторсем кӗрлеҫҫӗ,
е вӑхӑт-вӑхӑт инҫетре

ав, улап-йытăсем вĕреççĕ—
суранлă çĕр тăр-тăр чĕтрет.

Тухăçалла пĕрре ял витĕр
васкавлă иртрĕç нимĕçсем.
Пытанчĕ çын, чăххи-чĕппи те
тухмарĕ урама вĕçсе.

Куратăп эпĕ: пирĕн Надя
килне кĕрет пĕр нимĕçпе.
Шкулта та нимĕçсем канаççĕ,
пуçланчĕç ак ĕçкĕ ĕçме.

Тем сиснĕ пек сикет чĕреçĕм.
Ма нимĕç Надьăпа пĕрле?
Тухаççĕ те татах кĕреççĕ...
Ку каç мана мĕн хатĕрлет?

Хĕвел ансан, илтетĕп сасă,
палларăм Надя сассине.
Чӳречене чаршав карсассăн,
кĕме хушать вăл хăй патне

Çула тухмашкăн хатĕрлентĕм,
анса тăратăп эп çĕре.
Кĕсъере мар пек пистолетăм,
перет пек манăн чĕрере.

Чӳречери чаршав чĕтренчĕ—
чăматăп тĕттĕм çенĕке.
Ун кил-çуртне хальччен кĕменччĕ.
Кĕретĕп-ши-мĕн читлĕхе.

Пӳрте кӗрсен, тӳрех вӑрт-варттӑн
мана пытарчӗҫ шкап хыҫне:
«Эп,— терӗ вӑл,— сана хӑтартӑм,
мана хӑтар ҫак касхине»...

Ак ҫенӗкре ура сассийӗ.
Кӗреҫҫӗ ик кӗтмен хӑна.
Ҫан-ҫурӑм тӑрӑх чупрӗ сивӗ—
тӑшман ик утӑмра кӑна.

Кӗрекене хӑналанмашкӑн
вӗсем вырнаҫрӗҫ хуҫалла.
Вӗлер, ҫарат, ӗҫсе-ҫи, ашкӑн—
вӗсен законӗ ак ҫапла.

Мӗнле чӑтса ларать-ши Надя?
Мӗнле тӳсет ҫӑка сӗтел?
Ҫапкаланаҫ, эрех тӑкаҫҫӗ...
Эх, тӗп тума тупасчӗ мел!

Пӗр ӳсӗрри тухса йӑванчӗ.
Тепри кунтах юлашсӑн, ав.
Тултах канмашкӑн пит аванччӗ—
кансӗрлемест ӳпре-шӑна...

Анчах та обер-лейтенантӑн
пӗччен юлма сӑлтавӗ пур:
салтаксемпе халь мӗн тӑватӑн?
Умри хӗрарӑмӗ матур...

Хӗрарӑма тӑсать ханша вӑл,
тайкаланать мӗлки умра.

Хăй чĕлхипе тем шăпăл-шапăл
сӳпĕлтетет анра-сухра.

Хĕрарăма тытса, вăл урнăн
ыталамашкăн çулăхсан,
тимĕрпеле — мĕнле вăй пур ман—
çапла çапатăп тăнлавран.

Хам кушакла сикнех пуль, ахăр—
сисмен вăл эп çывхарнине.
Ун çумĕнче мĕн пур — пухатпăр:
пистолетне, автоматне...

Тек чăрманма кунта хăрушă,
тăшман ан пӳлтĕрех çула.
Чӳречерен тарма çул уçă
Садран тӳрех — пахчаналла.

Таратпăр. Таврара пăч тĕттĕм.
Итлетпĕр. Хир сывлать хуллен.
Шăрчăксем çеç сикеççĕ вĕттĕн
ура çĕре пусмассерен.

Каллех васкатпăр. Нӳрĕ юхăм
кас-кас чупса иртет çумран.
Ак çухрăм хыççăн юлчĕ çухрăм,
умра çыран курнать хуран.

Ман Надьăна кунта тем пулчĕ.
Кăшт сывлăш çавăрса илсен,
сăмах чĕнмесĕр алă сулчĕ,
хыçа вăл пăхрĕ вăрахчен.

Вăл шăппăн-шăппăн пăшăлтатрĕ
Çил илтесрен шикленнĕ пек:
«Чĕреçĕм канăçне çухатрĕ
яла ман ывăл юлнипе...

Тăшман пĕлсен?.. Мĕскер тăвас ман?..
Халех каяс та систерес.
Ирччен эп килĕп... Тен, аташмăн,
эп килмесен... пĕччен кай эс»

Сывпуллашма алне памарĕ.
Чуптурĕ ăшшăн, юлташла.
Тĕттĕмелле вĕçсе вăл кайрĕ
Тутăрĕпе сула-сула.

Ун пĕчĕк ывăлне пĕлменччĕ.
Кукашшĕпе пурнать иккен...
...Тавралăхри хура пĕркенчĕк
ма çĕкленет-ши ир килсен?

Сехет кĕтетĕп, иккĕ, виççĕ...
Ма час килмест вăл? Ма вăрах?
Начарлăха чĕрем ман сисрĕ,
кайма тăратăп унсăрах.

Ял еннелле юлашки хут ак
эп çаврăнап. Сывпуллашар.
Çав самантра унта çап-çутă
çĕкленчĕ пысăк вут-кăвар.

Эп килнĕ ял çунать, юлташăм.
Ăнлантăм эпĕ пĕтĕмпех:

тăшман урать, вăл тавăрасшăн
пĕр вилĕмшĕн çĕр вилĕмпе.

Вăрах эп кĕтрĕм. Вăл килмерĕ
ирхи çут шуçăмпа пĕрле.
Куççуль пек, çумăр ӳккелерĕ...
Çил шăлчĕ манăн куççуле...

5.

Вăрман тăрăх вăрах суллантăм.
Эп курнине эс ан курах.
Шыçа пуçларĕ ман суранăм—
Хăть чĕреллех касса пăрах.

Утма вăй çук, чăтма çук выçă.
Çапла çӳрерĕм шăп эрне.
Элчель çӳрерĕ пуль ман хыççăн
йăтса мăкалнă çавине...

Вилмерĕм эпĕ, килсĕр каскăн,
çитейрĕм, тен, çĕр çухрăма.
Партизансен йĕрне тупассăн
сунманччĕ. Тупрăм-тупрăмах.

Тăван пек йышăнчĕç, килти пек.
Каллех стройра эп, партизан.
Вутра çунман, шывра та типĕ—
гасан упрарăмăр чыса.

Çĕршыв куççулĕшĕн, чĕр юнĕшăн
йăлт тавăртăмăр тăшмана.

Çапăçура урасăр юлтăм,
хирте çухатрăм эп ăна.

Ӳте касса татсан та, пурпĕр,
çук, парăнмасть çав яш чĕре,
Куçа курнатчĕ шурă шупăр
пĕркеннĕ ялăм инçетре.

Вăрмансенче виç хĕл ирттертĕм
ыталаса пăшалăма.
Килтен кĕтсе эп илеймерĕм
çыру чуна кăшт ăшăтма.

Тăван çарпа пĕрлешнĕ хыççăн,
госпительтен тăван киле
çыру çырсаттăм иккĕ-виççĕ.
Çырмарĕç. Манчĕç-ши элле?..

Кĕтен хыпар çаплах килмерĕ,
салам пулмарĕ арăмран.
Ват тухтăр чĕрене итлерĕ:
— Ан хуйхăр,— терĕ,— тус, тăван.

Кăвак конверт мана параççĕ.
Ăшчик вăркать вуличченех.
Куççем ăна курма хăраççĕ.
Мĕн çырнă-ши шур хут çине?

Халь асăнма та питĕ йывăр
Вулас пулман çав шур хута.
Эп кайсанах-мĕн вилнĕ ывăл...
Ман мăшăр тухнă çич-юта...

«Нумай пулмасть вăл çăмăлланчĕ»,—
тесе çыраççĕ кӳршĕсем.
Мана кĕтме çитмен ун шанчăк,
ларас темен пĕччен шӳсе...

Ывăлăма курас килетчĕ.
Сĕм вăрманта, хура пӳртре,
юратнă мăшăрпа пĕрлеччĕ
куçа хупсан, ыр тĕлĕкре...

Чыс-хисеппе эп вăрçă витĕр
çитесшĕнччĕ тăван киле.
Ҫам айăплă? Манран ан ыйтăр.
Ман пурнăç кайрĕ иккĕлле.

Тен, вăрттăн-вăрттăн, айăп çитнĕн
йĕрет пуль арăм вăранса.
Хапха енне пăхать пуль шиклĕн
кĕтсе салтак таврăнасса.

Çук, эп вĕсен килне кĕмерĕм,
чĕртмерĕм сӳннĕ сурана.
Телейлĕ пурăнччăр чиперрĕн!
Тек вăрçă ан пултăр кăна!..

Юлашкинчен сана калас-и
ыр тантăш Надя шăпине?
Юнĕçенсем ăна вакласçĕ...
Çĕрпе хуплаççĕ ачине...

Улмуççисем лартса хăвартăм
ыр тантăш вил тăпри çине.

Куççульпеле ăна шăвартăм
инçе çула тухас чухне.

Ăçта кайсан, кампа пулсан та,
Ун сăнĕ каймĕ умăмран.
Тăпри çине эп лартнă садăм
вăрçа ан куртăр нихăçан.

6.

Салтакăм калавне вĕçлерĕ.
Йывăрлăхран пушаннă пек,
çине-пуçне тӳрлеткелерĕ
Шăп пытăм эп тĕлĕннипе.

Чӳречерен пăхать çут шуçăм,
шăвать вăрман, лапам-тӳрем,..
Инçетелле пăхса пыруçăн
тăрса юлаççĕ çухрăмсем.

Ан кулянсам, юлташăм-тусăм,
умри малашлăх хитререх.
Васкатăр пуйăс, çиçтĕр шуçăм—
çитес çĕре çитетпĕрех!

## ТУПМАЛЛИ


| | стр. |
|---|---|
| Тăван çĕршыв | 3 |
| Хĕвеллĕ кил-çурт | 5 |
| Уйрăлнă чух | 7 |
| Анăçа каятчĕ каччă | 9 |
| Ан ман | 10 |
| Таврăнсан | 11 |
| Çулсем | 14 |
| Утмаçул | 16 |
| Юратнă сăнсем. | 18 |
| Çумăр хыççăн | 19 |
| Юрату | 20 |
| Эс айăпсăр ман чĕрере | 21 |
| Ан кулянсам | 23 |
| Ирхине | 24 |
| Савнипе сăмах пĕтмерĕ | 26 |
| Юратасчĕ тетĕп те | 27 |
| Ывăлăма | 28 |
| Асатте | 29 |
| Пĕлĕтсем | 30 |
| Нефть | 32 |
| Октябрьск | 34 |
| Аса килет Азербайджан | 36 |

Малтан-мала! . . . . . . . . . . . . . 38
Çĕнĕ çул . . . . . . . . . . . . . . 40
Мĕтри . . . . . . . . . . . . . . . 42
Тăван тавралăхра . . . . . . . . . 49
Çул хыççăн çул иртсен . . . . . . 53
Сăнӳкерчĕк . . . . . . . . . . . . . 58
Икĕ хĕрарăм . . . . . . . . . . . . . 59
Çеçпĕл Мишши . . . . . . . . . . . 64
Фукурюмару юрри . . . . . . . . . 65
Тинĕс . . . . . . . . . . . . . . . . 71
Учительницăна . . . . . . . . . . . 72
Инке . . . . . . . . . . . . . . . . . 74
Тăванкассем . . . . . . . . . . . . . 76
Салтак калавĕ . . . . . . . . . . . 133.

---

Алексей Андреевич АФАНАСЬЕВ

СТИХИ и ПОЭМЫ

Художник П. Сизов

Редактор Ю. И. Скворцов. Тех. редактор А. И. Краснов.
Худож. редактор М. А. Ильин. Корректор Н. Д. Деомидов.

НТ 03159. Сдано в набор 6|IX-1957 г. Подписано к печати 26|VIII-1958 г.
Формат 70×92¹|32. Объем в 5,85 п. л., учетн. изд. л. 5,14.
Заказ 2766. Тираж 1.500. экз.
Цена 3 руб. 55 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары, Володарского, 5, Дом печати.

K

Це 3 руб 55 коп.